Ц. Б. им. Горького

1938
АВГУСТ
9
ЫТЛАРИКУН
182 (4995) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АСС Республикин Верховнăй Совечĕн хаçачĕ Пĕр №-ре 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 6—37. Ред. заместителĕн 6—58. Редакци секретарĕн 4—40. Дежурнăйăн 6—23.

Йапони военшчини Йапоние ССР Союзне хирĕç вăрçа туртса кĕрет

Июлĕн 29-мĕшĕнчен пуçласа Йапони военшчини Хасан кӳлли районĕнче совет территорийĕ çине чылай хутчен провокаци туса тапăнчĕ. Çав тапăнусене Йапонин регулярлă çарĕсем хутшăннă, вăл çарсем пур тĕрлĕ калибрлă артиллерине, вăл шутрах йăвăр артиллерине те ĕçе йанă. Йапони военшчинăпа çыхăнса тăракан ушăнсем халĕ çав тапăнусене „чикĕри инцидент" теме тăрăшаççĕ, анчах ăна ун пек хаклама май çук. Йапонин регулярлă çарĕсем Хасан кӳлли районĕнче совет территорийĕ çине кăçса кĕни вăл—Йапони военшчини Йапоние Совет Союзне хирĕç вăрçа туртса кĕме уççăнах хăтланни пулса тăрать.

Июлĕн 29-мĕшчен чикĕн çав участкинче йаланхи пекех лăпкă ларуçăру пулнă. Анчах июлĕн 29-мĕшĕнче Йапонин регулярлă чăçĕсем совет территорийĕ çине тапăнса кĕчĕç тата Безымйаннайа йатлă высотăна вăйпа туртса илме хăтланчĕç. Ку тапăнăва пирĕн пограничниксем çĕмĕрсе тăкрĕç. Çакăн хыççăн унта Йапони военшчини регулярлă çарсен дивизине артиллерипе пĕрле пырса тăратрĕ, унтан вара июлĕн 31-мĕшĕнче, ССР Союзĕн государствăлă чиккине пысăккăн та пĕр чăрмансăр тăмасăр пăсса, каллех Безымйаннайапа Заозернайа высотасене, пĕр сăмахсăрах Совет Союзĕн аллинче тăракан высотасене, туртса илме хăтланса пăхрĕ. Çакăн пек хăтланнине „чикĕри инцидент" тесе калани сахалтан та кулăшла. Уççăнах курăнса тăрать, Йапони военшчини çакăн пек ĕçсене пĕртен-пĕр тĕллевпе—Йапоние Совет Союзне хирĕç вăрçа туртса кĕрес тĕллевпе тунă.

Йапони военшчини Йапонири тата пĕтĕм тĕнчери общчĕствăлă шухăша пĕр чăрмансăр тăмасăр та киревсĕр шантажлама хăтланать, ку тĕлĕшпе вăл, регулярлă çарсене тата артиллерине ĕçе йанипе пĕрлех, тата Хасан кӳлли патĕнчи район Манчжури территорийĕ çинче вырнаççа тăрать текен суйа сăмахсем сарать. Вăрçă чĕртекенсем çапла суйса калависене пуçламĕшĕнчех тăрă шыв çине кăларнă. Пуриншĕн те паллă, ССР Союзĕпе Манчжури хушшинчи чикĕне Российăпа Китай хушшинче 1886 çулта тунă Хунчун килĕшĕвĕпе тата çав килĕшӳ çумне хушса хунă картăпа паллă туса çырса хунă. Килĕшӳ те, çавăн пекех картă та Безымйаннайапа Заозернайа высотасем пирĕн территори çинче иккенне кăтартса çирĕплетсе параççĕ.

Йапони çарĕсем Манчжурине вăйпа кĕрсе йышăннăранпа иртнĕ 7 çул хушшинче, Совет Союзĕпе Йапони хушшинчи хутшăнусене йăвăрлатса йарас тесе, вĕçне çитиех шутласан, вăрçă кăларас тесе, Йапони военшчини диверсисемпе провокацисен тĕрлĕ меттĕчĕсемпе усă курчĕ. Июлĕн 31-мĕшĕнче Йапонин регулярлă çарĕсем совет территорийĕ çине тапăнса кĕни, çав шухăшпа квантун штабĕ пуçласа йанă пит те пысăк провокаци пулса тăрать. Çак намăссăр провокацине организацилекенсем совет территорийĕ çинеле регулярлă çарсене артиллерипе пĕрле кĕртсе йачĕç, мĕншĕн тесен вĕсем çакăн пек майпа вăрçă пушарĕ чĕртсе йама шутласа тăнă.

Августăн 4-мĕшĕнче Йапонин Мускаври посолĕ г. Сигемицу Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕпе М. М. Литвинăв йулташпа калаçнă чухне, Йапони правительстви инцидента мирлĕ йĕркепе локальнăй йĕркепе татса пама кăмăл пулнă, тесе каларĕ. Анчах г. Сигемицу М. М. Литвинăв йулташпа çапла калаçнă хыççăн тепĕр кунранах Йапонин регулярлă çарĕсем совет территорийĕ çине вăйлăн пеме пуçларĕç тата, пур тĕрлĕ калибрлă нумай тупăсем пулăшнипе, совет çарĕсене хирĕç наступлени пуçларĕç. Паллах, совет çарĕсем Йапони чăçĕсене тивĕçлĕ отпор парса, хăйсем контрнаступленине куçрĕç, совет территорине Йапони çарĕсен йулашкийĕсенчен тасатрĕç.

Йапони çарĕсем чикĕн тепĕр участки çинче те, Гродеково районĕнче совет территорийĕ çине тапăннă, совĕтăн чикĕри нарйачĕ çине атака тунă, çав нарйада пулăшма пырса çитнĕ совет подкрепленийĕ çине пулеметсенчен пенĕ, совет территорийĕ çинчи 588,3 высотана йышăннă. Совет çарĕсем ку тапăнăва та çавăн пекех çапса çĕмĕрнĕ, вĕсем çӳлерехре асăннă высотана йапонецсенчен тасатнă.

Çак çĕнĕ провокацисем, пĕр тăрăхри сăнчăрăн уйрам сыпăкĕсем пулса тăраканскерсем, çакна пит лайăх, тавлашса çентерме çук çирĕппĕн çирĕплетсе параççĕ: Йапони военшчинин тĕллевĕ—кирек мĕнле средствăсемпе пулсан та, чи кирлĕ вĕр тата намăссăр средствăсемпе пулсан та, Йапоние Совет Союзне хирĕç вăрçа туртса кĕресси пулса тăрать.

Йапони военшчини пуçласа йанă çакăн пек провокацисем умĕнче Совет Союзĕн хăйĕн чиккисене хӳтĕлес тĕлĕшпе ирĕксĕрех тивĕçлĕ контрмерăсем йышăнмала пулчĕ. Совет территорине Йапони çарĕсен йулашкийĕсенчен тасатнă. Анчах Йапони военшчини совет территорийĕ çине тепĕр хут тапăнса кĕме хăтланса пăхмĕ тесе ĕнентерекен гаранти ăçта-ха?

Çавăнпа, Йапони посолĕ Сигемицу августăн 4-мĕшĕнче каланă пек, Йапони правительствин чăннипех „мирлĕ кăмăл" пур пулсан, совет территорийĕ çине тепĕр хут тапăнса кĕрес мар пирки унăн уçăмлă та тĕрĕс гарантисем памалла. Унăн тата, йулашкинчен, хăйĕн военшчинине çăварлăхламалла, çав военшчинă çавăн пек провокацисем туса Йапоние пĕр хут мар унăн кӳршĕри çĕршывсемпе вăрçа туртса кĕнĕ ĕнтĕ. Йапони правительстви квантун тата Корейă çарĕсене халĕхи чикĕне хисеплеттертĕр.

Вăрçă ĕçĕсене пула икĕ йенĕнче те çынсем вилнишĕн Йапони правительстви ответ тытать, çав вăрçă ĕçĕсене Йапони военшчини совет çарĕсене хирĕç пирĕн территори çинче пуçласа йанă.

Совет Союзĕ вăрçăшăн пулман тата вăл халĕ те вăрçăшăн мар. Йалтах урăхла, вăл пĕтĕм тĕнчипех мир тăвассишĕн тăрăшнă тата халĕ те тăрăшать. Çакă августăн 7-мĕшĕнче Йапони посолĕпе калаçнă чухне Литвинăв йулташ кĕскен те татăклăн каласа панă çак сĕнӳсенчен пит уççăн тухса тăрать:

„Икĕ йенĕ те паллă лини урлă каçмастпăр тата персе тăмастпăр тесе сăмах параççĕ тата хăйсен çарĕсене,—килĕшӳ тунă вăхăтра вĕсем çав линин тепĕр йенне пырса тухсан,—чĕнсе илме сăмах параççĕ пулсан, вăрçă ĕçĕсем чарăнĕç. Çакăн пек лини вăл—Хунчунри килĕшӳ çумне хушса хунă картă çинче кăтартнă чикĕ пулса тăрать, çапла вара июлĕн 29-мĕшчен, урăхла каласан, Йапони çарĕсем совет территорийĕ çине пĕррремĕш хут кĕриччен пулнă чухнехи пек ларуçăру пулса тăрĕ".

Çакăн пек ĕнтĕ Совет Союзĕн позицийĕ. Вăл позици пĕр тĕллевпе çеç—вăл мирлĕ пурнăçа сыхласа хăварасси, чикĕре малтанхи пек лăпкăлăх туса хурасси тата Йапони военшчинин совет территорийĕ çине малашне провокацилĕ тапăнса кĕрессине сирсе йамалли условисем туса хурасси. Çапах та, Совет Союзĕ чикĕне тепĕр хут пăхса тухассипе килĕшмен те, килĕшмест те.

Совет Союзĕ хăйĕн вăйĕсем çине шанса тăрать. Вăл вăрçăшăн мар. „Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанисенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе йаракансем çапни çине çапнипех ответ пама хатĕр тăратпăр" (Сталин).

Йапонири халăх массисем, çавăн пекех тата хăйсен çĕршывĕн пĕтĕм тĕнчери тата шалти ларуçăрăвне ура пуçпа тĕрĕс хаклакан елементсем, йĕркесе пыракан лагĕрти елементсем те Совет Союзĕпе вăрçасшăн мар, кун пирки нимĕн иккĕленмелли те çук. Йапони военшчини çакăн çинчен лайăх пĕлсе тăрать, тесе шутлама пулать. Анчах, шăпах çавăнпа пулмала ĕнте, темле пулсан та Йапоние Совет Союзне хирĕç вăрçа туртса кĕме тăрăшакан авантюриссем хăйсен провокацилĕ ĕçĕсенче шаларах та шаларах кайса пыраççĕ.

Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Литвинăв йулташ çакăн пек калани Йапони империалисĕсен пуçĕсене уралтарса йама тивĕçлĕ: „Совет правительстви хăйĕн пограничникĕсене пĕрмайах вĕлерсе пĕтернишĕн тата амантнăшăн йе Йапони çарĕсем совет территорине вăхăтлăха çеç те пулин йышăннăшăн малашне пĕр айăпламасăр тӳссе тăма пултараймасть, вăл малашне ун пек тĕлсенче чи хăйар мерăсемпе усă курма, артиллерипе авиаци таранах ĕçе йама хатĕр тăрать".

Совет правительстви йышăннă позицийе ССР Союзĕнчи халăхсем пурте пĕр шухăшпа кăмăллаççĕ. Йапони военшчини тăвакан провокацисем пирки пĕтĕм тĕнчери пичет çырнисенчен мĕн пур çĕршывсенчи халăх массисемпе мирлĕ пурнăçа йуратакан çынсем Совет Союзĕн позицийĕ майлă тăни курăнать. Çакна ăнланмалла та ĕнтĕ, мĕншĕн тесен вăрçă чĕртме тăрăшакан Йапони военшчинине Совет Союзĕ çирĕп отпор пани тата пĕтĕм совет халăхĕ хăйĕн вăйĕ çине çирĕп шанса тăни пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăç ĕçне тата мир интересĕсене пулăшаççĕ.

(„Правда" умстатйи, августăн 8-мĕш.)

Хасан кӳлли районĕнчи тытăçусем пирки

Йапони посолĕ г. Сигемицу августăн 7-мĕшĕнче каллех Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Литвинăв йулташ патĕнче пулнă. Вăл пывипе усă курса, Литвинăв йулташ посола çакна асăнтарнă: темиçе кун кайарах есĕр Йапони правительстви йачĕпе вăрçă ĕçĕсене чарса лартасси çинчен сĕнӳ панăччĕ; кун пирки сире: Манчжури йенчен тапăнассисене тата персе тăрассине чарса лартсанах, совет йенĕ йенчен сире ответлесе вăрçă ĕçĕсем тума кирлĕ пулмасть, тесе ответ панăччĕ, тенĕ. Çапла вара вăрçă ĕçĕсене пĕтерсе лартасси пĕтĕмĕшпех Йапони йенчен килнĕ. Пит те шел, тепĕр кунне Манчжури йенчен Йапони çарĕсем совет территорийĕ çине тепĕр хут тапăннă, каллех артиллерирен пеме, вăл шутрах йăвăр артиллерирен те пеме пуçланă, çакна пула совет йенĕн ирĕксĕрех артиллерирен персе ответлемелле тата авиацийе ĕçе йамалла пулнă Йапони атакисене çĕмĕрсе тăкма тата Йапони чăçĕсен йулашкисене совет территорийĕ çинчен хĕссе кăларма пулсан та, çав ĕç пулнăшăн шеллемесĕр тăма май çук. Икĕ йенчен те пулнă такаксемшĕн Йапони правительстви çине ответлăх хумасăр йурамасть. Литвинăв йулташ, Хасан кӳлли районĕнчи тытăçусем çинчен, вĕсене чикĕри инцидент тесе калама май çук, чикĕри инцидент вăл чикĕсенчи салтаксем тытăçса илни çинчен пĕлтерекен йăпала, тесе паллă тунă. Чикĕ хуралĕн йалан пекех артиллери пулмасть, кунта вара йапонецсем пĕррремĕш наступленине артиллери пулăшнипе тунă. Курăнсах тăрать, кунта мирлĕ вăхăтра совет территорине туртса илме хăтланни йе Йапоние ССР Союзне хирĕç вăрçа сĕтĕрсе кĕме хăтланни те пулнă пулас. Çак тытăçун пĕтĕм хăрушлăхĕ çакăнта ĕнтĕ, кун çине Йапони правительствин чи пысăк тимлехпе пăхас пулать. Г. Сигемицу, Йапони çарĕсем оборонăлă позици кăна йышăнса тăраççĕ, вĕсем Манчжури территорийе сыхлама тивĕç, тесе асăрхаттарнине хирĕç Литвинăв йулташ çапла ответ панă: Манчжури территорийĕ çине никам та тапăнман тата тапăнма та хатĕрленмен, Йапони çарĕсем совет застависем çине тапăннине, вăл заставăсем çине артиллерирен пенине тата совет территорийĕ çинче линисем йышăннине—оборонă пулать, тесе ăнланаççĕ пулсан, вĕсем оборона çинчен тĕлĕнмелерех шухăшлаççĕ пулас.

Г. Сигемицу çапла пĕлтернĕ: епĕ хаман сĕнĕве—икĕ йенĕн çарĕсем те вăрçă ĕçĕсене чарса лартасси çинчен панă сĕнĕве тепĕр хут пама килтĕм, вăл çарсем килĕшӳ тунă вăхăтра мĕнле положенире пулнă—çавăн пекех йулмалла. Çакăн хыççăн вара унăн шухăшĕпе, чикĕне палăртса çирĕплетме ССР Союзĕпе Манчжоу-Го представителĕсенчен комисси тума тытăнма йурать, вăл комиссире йапонецсем те пулмалла. Литвинăв йулташ: вырăнти положени улшăнма пултарать, килĕшӳ тунă вăхăт тĕлне икĕ йенĕ те лайăхрах позицисем йышăнма тăрăшĕç, ку вара вăрçă ĕçĕсем малалла та пулса пырассине пĕлтерет, тесе кăтартса панă. Кирек мĕнле пулсан та, совет территорийĕ çинчен Йапонин пĕчĕк çарĕ çеç те пулин пур чухне нимĕнле килĕшӳ те пулма пултараймасть. Халĕ вăл çук, анчах посол сĕнĕвне йышăнас пулсан, вăл унта каллех пырса тухма пултарать. Йапони йенĕ Манчжури территорийĕ çинчен совет территорийĕ çине тапăнассисене тата персе тăрассине паллă вăхăт тĕлне пĕтерсе лартма гаранти парать пулсан, вара совет йенĕ те Манчжури территорийĕ пирки çавăн пекех гаранти парĕ.

Г. Сигемицу хăй сĕнĕвĕшĕн, вăрçă ĕçĕсене вĕсем паллă вăхăт тĕлне мĕнле пулса тăвă, çав ларуçăрурах чарса лартассишĕн нумайччен çине тăнă, унтан тата икĕ йенĕн çарĕсене те паллă вырăна илсе кайасси çинчен сĕнӳ кăларса тăратнă. Чикĕне редемаркаци тăвас ĕç валли г. Сигемицу Хунчунри килĕшӳйе, çавăн пекех тата Манчжоу-Го йе Йапони аллинче пулма пултаракан ытти материалсемпе те усă курма сĕннĕ.

Литвинăв йулташ çапла каланă: Йапони çарĕсем совет территорийĕ çине тапăнса конфликт тусă хунине кура, вĕсене, татах тепĕр хут тапăнасси ан пултăр тесе, ниçенерех илсе кайас пулсан, ăна саламлама май пулĕччĕ, çапла тунă тата тепĕр гаранти пулнă пулĕччĕ. Анчах, совет çарĕсене илсе кайма нимĕнле сăлтав та çук, вĕсем йаланах хăйсен территорийĕ çинче çеç пулнă тата халĕ те хăйсен территорийĕ çинче тăраççĕ, вĕсем Манчжурине йунаса хăратмаççĕ. Чикĕне редемаркаци тăвасси çĕршывсем хушшинче тунă договорсем тăрăх çеç пулма тивĕç. Совет правительстви Хунчунри килĕшĕве тăратрĕ, Манчжоу-Го йе Йапони Российăпа Китай хушшинче кайарахпа тунă килĕшӳ тăратмасан, редемаркаци çав Хунчунри килĕшӳ тăрăх кăна пулма пултарать. Анчах ун пекки урăх çук. Чикĕне палăртас ĕçре урăх нимĕнле материал та вырăн йышăнма пултараймасть. Литвинăв йулташ хăйĕн сĕнĕвне çакăн пек кĕскен те татăклăн каласа панă: Икĕ йенĕ те паллă лини урлă каçмастпăр тата персе тăмастпăр тесе сăмах параççĕ тата хăйсен çарĕсене,—килĕшӳ тунă вăхăтра вĕсем çав линин тепĕр йенне пырса тухсан,—чĕнсе илме сăмах параççĕ пулсан, вăрçă ĕçĕсем чарăнĕç. Çавăн пек лини вăл—Хунчунри килĕшӳ çумне хушса хунă картă çинче кăтартнă чикĕ пулса тăрать, çапла вара июлĕн 29-мĕшчен, урăхла каласан, Йапони çарĕсем совет территорийĕ çине пĕррремĕш хут кĕриччен пулнă чухнехи пек положени пулса тăрĕ. Чикĕре лăпкăлăх пулса тăнă хыççăн, унта икĕ йенлĕ комисси тухса кайать, вăл комисси составĕнче пулĕççĕ: пĕр йенчен—ССР Союзĕн икĕ представителĕ, тепĕр йенчен Йапонин пĕр представителĕпе Манчжурин пĕр представителĕ; вара вăл комисси Хунчунри килĕшӳпе, ун çумне хушса хунă протоколсемпе тата картăпа палăртса çирĕплетнĕ чикĕне редемаркаци тума тытăнать. Посол çак пулса иртнĕ калаçу содержанийĕ çинчен шухăшласа пăхма тата ун пирки татах калаçма пыма сăмах панă.

Çакăн хыççăн Литвинăв йулташ посола çакна каланă. Йапони правительстви чикĕн пĕр участкинчи вăрçă ĕçĕсене чарса лартма сĕнӳ кăларса тăратнă вăхăтра, тепĕр участкра, кунта вара Гродеково районĕнче, Йапони роти станоклă виçĕ пулеметпа персе сасартăк совет чикĕри нарйачĕ çине—совет территоринчи 588,3 высотана сыхлакан нарйад çине атакăна тапăннă, вăл высотана йышăннă. Часах пырса çитнĕ совет подкреплениийĕ çине Йапони роти пулеметсенчен пенĕ, вăл рота Манчжури территорийĕ çине кайса пытаннă, высота çине Йапонин 10 гранатине тата гранатисен 50 колпачокне пăрахса хăварнă. Çапăçу вăхăтĕнче темиçе красноармейеца вĕлернĕ тата амантнă. Йапони йенче те вилнисемпе аманнисем пулма кирлĕ. Çавнашкал ĕçсем пирки пайтах протестсем пынă хыççăн, çĕнĕ протест панипе чарăнса тăни усăсăр пулнă пулĕччĕ. Çакна кура ĕнтĕ çакна калама кирлĕ курăнса тăрать: совет правительстви хăйĕн пограничникĕсене пĕрмайах пĕтернишĕн тата амантнăшăн, йе Йапони çарĕсем совет территорине вăхăтлăха çеç те пулин йышăннăшăн малашне пĕр айăпламасăр тӳссе тăма пултараймасть, вăл малашне ун пек тĕлсенче чи хăйар мерăсемпе усă курма, артиллерипе авиаци таранах ĕçе йама хатĕр тăрать. Йапони правительстви квантун тата Корейă çарĕсене халĕхи чикĕсене хисеплеттертĕр. Чикĕре татти-сыпăксăр пулса пыракан „инцидентсене" тата тытăçусене пĕтерме вăхăт ĕнтĕ.

(ТАСС).

Пĕрремĕш (Приморски) Çар штабĕ пĕлтерни

Кăçалхи августăн 4-мĕшĕнче Сигемицу посол Литвинăв йулташа „мирлĕ" сĕнӳ панă хыççăн тепĕр кунтан, Хасан кӳлли хыçĕнче Йапони çарĕсем совет территорийĕ çине вăйлăн пеме пуçланă. Нумайăн хисепленекен пур тĕрлĕ калибрлă артиллери, вăл шутрах йăвăр артиллери те Манчжоу-Го территорийĕ çинчен персе тăнă, Йапони совет çарĕсене хирĕç наступленийе тăвакан сурăн ĕçĕсене хӳтĕлесе тăнă. Совет çарĕсем çакна хирĕç ответлесе артиллерирен пеме пуçланă. Артиллерирен 3—4 сехет хушши хирĕ-хирĕç персе тăрса Йапони артиллерине парăнтарнă хыççăн, совет çарĕсем, совет авиацийĕпе пĕрле, контрнаступлени пуçланă, хамăр территорийĕ Йапони çарĕсен йулашкийĕсенчен тасатнă, хамăрăн чикĕри нарйатсене çирĕппĕн йышăннă.

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă Фронта—салам!

ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Çул-йĕр Управленийĕнчи, 240-мĕш Çул-йĕр Експлоатаци участкинчи Шосгидротехстрой профсойузĕн Обкомĕнчи рабочисен, служащисен тата инженерла-техникла работниксен митингĕ йышăннă резолюцирен

Йапони фашисăмĕ пирĕн совет çĕрĕ çине, ирсĕррĕн тапăнса кĕнине пĕлсен, епĕр вăл тăшмансене чĕререн кураймасăр ылханатпăр.

Хамăрăн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă Фронт Йапони военшчинине çирĕп отпор панине чĕре тулли хавасланса палăртатпăр.

Епĕр хамăрăн Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕн вăйĕпе хăватне çирĕппĕн шанатпăр, вăл пирĕн таса чикĕне пăсма никăçан та никама та ирĕк парас çук.

Совет халăхĕ Йапони фашисăмĕ çине тарăхса Ленин—Сталин партийĕ тавра, хăйĕн йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ тавра тата тачăрах пĕтĕçет, кирлех пулсан, партипе правительствă пĕрре чĕнсенех хамăрăн тăван çĕршыва сыхлама пур те пĕр шухăшлă пулса пĕр харăс тăратпăр.

Йапони военшчини пирĕн чикĕне ирсĕррĕн тапăнса кĕнине епĕр ĕç хухăçне хăнарĕнипе, хамăрăн производствăри программине вăхăтра тултарнипе тата оборонă ĕçне вăйлатнипе ответлетпĕр.

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр социализмлă çĕнтерӳсен организаторĕ—коммунистсен большевикла партийĕ!

Сывă пултăр халăхсен йуратнă çулçуçĕ Сталин йулташ!

Тăшман хăш йенчен килет, ăна çавăнтах вилĕм тивет

ИШЛЕЙ. Йапони военшчини Совет территорийĕ çине тапăнса кĕнине хирĕçлесе, августăн 7-мĕшĕнче пысăк митинг пулса иртрĕ. Митингра район центрĕнче ĕçлекенсем çеç мар, тата йалсенчен килнĕ колхозниксемпе йединоличниксем те, мĕн пурĕ икĕ пин çынна йахăн пулчĕç.

Митинга, Йапони самурайĕсене хытăн ылханакан сăмахсемпе, райĕçтăвком председателĕн заместителĕ Андрейĕв йулташ уçрĕ. Ун хыççăн ПСК(б)П райком секретарĕ Дедейĕв йулташ пысăк сăмах тухса каларĕ.

— Совет Союзĕн Хĕрлĕ Çарĕне Тинĕс Çар Флочĕ тата авиацийĕ тĕнчери никам çĕнеймин вăй пулса тăчĕç. Тăшман хăш йенчен килет, ăна çавăнтах вилĕм тивет.

Митинг çакăн пек резолюци йышăнчĕ:

— Епĕр тăван çĕршыва Йапони самурайĕсенчен сыхланă, сыхлатпăр та, малашне те йаланах сыхлама хатĕр. Партипе правительствă пире тăшмансемпе çапăçма чĕнсенех, епĕр хамăр тăван Хĕрлĕ Çарăн ретне пĕр харăс тăратпăр. Пирĕн çĕршыв çитĕнӳсем хыççăн çитĕнӳсем тăвать. Епĕр хамăрăн социализмлă çĕршыв чĕри тавра капиталистсем пурăннине йаланах асра тытса тăратпăр. Вăççăвакан тăшмансене отпор пама епĕр хатĕр.

Сывă пултăр пирĕн тăван çĕршыв!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисĕн асла çулçуçĕ Сталин йулташ!

Сывă пултăр пирĕн йуратнă маршал Ворошилов!

Мухтавлă пограничниксене саламлаççĕ

Августăн 4-мĕшĕнче Шупашкарти кирпĕч савăтĕнче ĕçлекен рабочисем, служащисем тата инженерла-техникла работниксем Йапони самурайĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнса кĕнине хирĕçлесе митинг туса ирттерчĕç.

Митинга пухăннисем хăйсем çине ĕçре стахановла йухăма анлăн сарса, социализмлă ăмăртăва вăйлатса ĕç нормине ытлашшипех тултарма, лайăх пахалăхлă кирпĕч туса кăларма, хамăрăн тăван çĕршывăн оборонă пултарулăхне тĕреклетес тĕлĕшпе Осоавиахим ĕçне вăйлăлатма обйазательствă илчĕç.

Митинг Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă Фронтăн мухтавлă пограничникĕсене саламларĕ.

Ç. Николайĕв.

Оборонă ĕçне вăйлăлатар

ЕЛĔК. Августăн 5-мĕшĕнче район центрĕнчи ĕççыннисен митингĕ пулса иртрĕ.

Митинга пухăннисем Йапони военшчини совет чиккине пăснине хирĕç протеслерĕç.

Митингра çакăн пек резолюци йышăнчĕç: Епĕр Елĕкри служащисем, рабочисем, колхозниксем—Йапони бандичĕсем Совет Союзне вăрçăпа тапăнма хăтланнине тарăхса ылханатпăр. Йапони военшчинин провокацилĕ ĕçĕсене хирĕç хамăрăн оборонă пултарулăхне тĕреклетес тĕлĕшпе Осоавиахимăн пуçламĕш организацисен ĕçĕсене вăйлатса йаратпăр.

Сывă пултăр коммунизсен партийĕ тата унăн çулçуçĕ Сталин йулташ!

В. Йефремăв.

Епĕр тăван çĕршыва сыхлама йаланах хатĕр

Трак районĕнчи типографинче ĕçлекенсен митингĕ йышăннă резолюци

Йапонин урса кайнă самурайĕсем пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чикĕне тапăнни çинчен илтсен, мĕн пур Совет Союзĕн халăхĕсемпе пĕрле епĕр чĕререн тарăхрăмăр, урса кайнă фашиссене çапса аркатас ирĕк-кăмăл пирĕн иккĕçĕнинчен те вăйлăрах хăпарчĕ. Фашиссем пирĕн Хĕрлĕ Çар йенле хăватлăн тепĕр хут курчĕç. Пирĕн таса та телейлĕ çĕр çине вĕсем хăйсен ирсăр лăпчăк урисене пусиа вĕсене хăвлĕ ӳкрĕ. Епĕр партипе правительствă пĕрре чĕнсенех, тăван çĕршыва сыхлама йаланах хатĕр, оборонă ĕçне вăйлатса, çар техникине вĕренсе пыратпăр.

Епĕр хамăрăн çĕршывшăн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм кăварпа тăма, кирлĕ пулсан пуçа хума та хатĕр.

Ĕçкунĕсене вăхăтра тата тĕрĕс çырса пымала

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ тăрăх, кашни бригадирăн ернерен сайра мар хайĕн бригадинче ĕçлекен колхозниксем миçе ĕçкунĕ тунине шутласа ĕçкĕнеки çине çырса пымала. Кунсĕр пуçне колхоз правленийĕн кашни уйăхра колхоз членĕсем иртнĕ уйăхра мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине кăтартакан списка кăларса çакмала. Анчах çакна хăшпĕр колхозсенче пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Час-часах колхозниксен ĕçкунĕсене вăхăтра ĕçкĕнеки çине çырмасăр çухатнисем йе ытлашши ĕçкунĕ çырса панисем пулкалаççĕ. Акă, Мартынкинăри „Хĕрлĕ хĕвелтухăç" колхозран (Трак р.) Владимирăв йулташ çапла çырса пĕлтерет: „Пирĕн бригадирсем колхозник ем ĕçлесе тăвакан ĕçкунĕсене вăхăтра ĕçкĕнекисем çине çырса памаççĕ. Май уйăхĕнчен пуçласа колхозниксем миçе ĕçкунĕ тунине тĕплĕн каласа пама пултăраймаççĕ. Колхоз правленийĕ те бригадирсене ĕçкунĕ ене вăхăтра çырса пама хушни пулман".

Тăрмăшри „Çĕнĕ çул" колхозри (Йелчĕк р.) пĕррремĕш бригадăн бригадирĕ В. Шемйакăв тăрăшса ĕçлекен колхозниксен ĕçкунĕсене йури чакарса çырса парат. Ийулĕн 31-мĕш кунĕнче К. Дудкинăпа К. Короḑковă колхозницăсем 375 шер кĕлте çыхнă пулсан, ĕçкĕнеки çине 92 кĕлте кайа лартса ĕçкунĕ панă. Мĕншĕн катнă? Никама та паллă мар. Машинăпа ĕçлекен А. Çергейĕвпа С. Оçипăв колхозниксем те ĕçкунĕсене саккунсăр катса çырса пынă пиркийех ĕçлеме пăрахнă. Шемйакăв бригадинчи колхозниксем урăх бригадăсене ĕçлеме кайаççĕ. Колхоз правлени Шемйаковăн ирсĕр ĕçĕсене пытарса усрат.

Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставне пăсма никама та ирĕк паман. Кашни колхоз членĕн, бригадир-и, колхоз правлени председателĕ-и вăл, пурин те устава пăхăнса ĕçлемеле. Кам та кам йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставне пăсат йе ăна пурнăçлассинчен пăрăнма шутлат, ун пек çынсем çинчен колхозниксен аслă пухăвĕнче сӳтсе йавас пулат.

Çитменлĕхсене тӳрлететпĕр

ТРАК. Кăçал Трак районĕнчи колхозсенче 9 комбайн ĕçлеççĕ. Малтанхи кунсенчех комбайнсене йĕркелĕ ĕçлеттерме кирлĕ условисем çителĕклĕ пулман. Комбайнерсене шкулта вĕрентсе кăларнă хыççăнах комбайн çине ĕçлеме лартсан, вĕсем малтанхи кунсенчех МТС йĕнчен кирлĕ пулăшу илеймен пулнă. Халĕ çав çитменлĕхсене тӳрлетсе çитеретпĕр ĕнтĕ. Комбайнерсем хăйсене шанса панă комбайнсемпе паллашса çитнĕ. Йастребăвпа Çергейĕв комбайнерсем куллен 16 гектар таран пуçтарма тытăнчĕç. Колхозниксем те уйри тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçре комбайн калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнине чăннипех ăнланаççĕ. Халĕ кашни колхоз хăйĕн уй-хирĕнчи тырпулне комбайнпа пуçтарса кĕресшĕн.

Анчах, уйрăм çынсем комбайнпа ĕçлессине хирĕç шухăш сарма пăрахман-ха. Именĕври „Малала" колхозра комбайн çинчи тырра турттарса тăма лашасем те уйăрса паман. Пухăвнă тырра хума вырăн çуккипе комбайнерсен ăна çинех тырра пушатмала пулнă. Молатăв йачĕпе тăракан колхозра комбайнпа вырнă тырра йышăнмасăр икĕ пин пăт ытла итем çинче выртарнă. Çакăн пек тĕслĕхсемпе хăшпĕр çынсем усă кураççĕ. „Победа" колхозра Фоминпа Григорйев комбайнерсем колхоз тыррине вăрланă,—тесе сăмах сарнă. Çак тĕслĕхсем вĕсем партипе совет организацисем тата машинă-трактăрлă станци директсийĕпе çĕрĕç пайĕ уйри тырпулсене пуçтарса кĕртессине куллен тата оперативлă йертсе пыман пирки пулнă. Кун пирки ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕн бӳровĕ хăйĕн решенийĕнче вăхăтра асăрхаттарса панă. Халĕ епĕр пĕтĕм вăйа уйри тырпула пуçтарса кĕртес, авăн çапас, государствăна тырă тăратас, акма тата колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх авансла тырă валеççе пама хатĕрленес çĕре вăй хурса ĕçлетпĕр.

Г. Закамский.

Вăрмарти тырă илекен пунктра

Государствăна тырă парас ĕç хĕрӳлĕ пырат. Районри чылай колхозсем ыраш парса татрĕç. Çурхи тырăсене пама тытăнчĕç. Хатĕрлев организацийĕ тырра вăхăтра илме тата ăна лайăх сыхласа усрама тивĕçлĕ. Анчах кунта тырăсене илме складсене хатĕрлесе çитермен. 3-мĕш №-лĕ складра тырă çине шыв анат. Унăн çине йусама тимĕр те илсе килнĕ пулнă, анчах ăна сушилкă йусанă çĕре илсе кайнă. Çавăн пекех урай хăмисене те йĕркелĕ сарман, дезинфекци туман. 4-мĕш №-лĕ складра кивĕ тырă купаланса выртат, вăл тырра клешчсем йернĕ.

Хатĕрлев пунктинче тарасасем çитмеççĕ, 2 тарасана йусама кайса панă, вĕсене халĕ те тӳрлетсе пĕтермен-ха. Çакăн пирки тырă илес ĕç те чăрăнса тăрат.

Тырă хатĕрлекен пункт кантурĕнче ĕçлекенсем тырă илес ĕçе хатĕрленмен, хатĕрлев комиссарийĕн уполномочĕннăй кантурĕнче ĕçлекенсем пунктăн ĕçĕсемпе сахал интересленеççĕ.

В. Алендейĕв.

Государствăна тырă парса татрĕ

Шинер йалсоветне кĕрекен „Балтиец" колхоз (Çĕрпӳ р.) кĕрхи тырăсене уйран пухса кĕртнĕ хыççăн авăн çапас ĕçе тытăнса государствăна обйазательнăй йеркепе тырă тăратмали плана 100 проценчĕпех тултарчĕ.

Çав хушăрах „Глиссер" тата „Красный Эгновец" колхозсем государствăна тырă тăратман-ха.

Йединоличниксем те кайа йулса пыраççĕ.

И. Михайлăв.

Ĕçе организацилеме пĕлни кирлĕ

ШĂХАСАН. Районта пур колхозсем те кĕрхи тырăсене вырса пĕтерни хыççăн, кĕлтесене капана хывас, авăн çапас, государствăна тырă тăратас тата çуртри вырас ĕçе тытăнчĕç.

Малта пыракан Уйкас. Кипекри Геḑман йачĕпе тăракан колхоз ыраш кĕлтисене уйран кӳртсе капана хывса пĕтерсе, государствăна районра чи малтан ыраш парса татрĕ. Çуртри вырма та лайăх организацилесе тухрĕ.

Чăвкă Варти „Майан 1-мĕшĕ", Çĕнĕ Пиверти „Пионер", Атнашри Кирăв йачĕпе тăракан колхозсем те кĕрхи тырăсене 6—7 кун хушшинче лайăх пахалăхпа вырса пĕтерсе, кĕлтесене капана хывса çитерчĕç. Ку колхозсенче пур ĕçе те кăтартулăн туса пыраççĕ. Вĕсем çак кун енчех çуртрисене вырса пĕтереççĕ.

Уйри тырпула пухса кĕртес ĕçре кайа йулса пыракан колхозсем те пур-ха.

Чăрăшкассинчи „Соревнование" колхоз уйри тырпула пухса кĕртес ĕçре тата ытти ĕçсенче те никăш колхозпа та ăмăртса ĕçлеместь. Ыраша 7 кун вырас вырăнне, 11 кунта тин вырса пĕтерчĕ. Ыраш кĕлтине те кĕртсе пĕтермен.

Колхоз плансăр ĕçлет.

Колхозăн 3 жнейкăран иккĕшĕ ĕçе йурăхсăр лараççĕ. Пĕр жнейкипе те тивĕçлипе усă курмаççĕ „Соревнование" колхоз начар ĕçлесе пынине районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем лайăх пĕлеççĕ, анчах пулăшмаççĕ.

А. Соловйов.

Ăмăртакан республикăри колхозра

ТУТАР РЕСПУБЛИКĔ. Шĕкĕр районĕнчи „Первое мая" колхоз кăçал пысăк тухăçлă тыр-пул пухса илет. 420 гектар çинчи пĕр пек тикĕс ларакан ыраш колхозниксене савăнтарат. Пысăк хаваспа вырăççĕ колхозниксем ăнса пулнă тырпула.

Колхоз хирĕнче икĕ комбайнпа ĕçлеççĕ. Республикĕпех паллă комбайнер, стахановец Гинатуллин Газиз, иртнĕ çул хăйĕн комбайнĕпе 663 гектар вырнăскер, кăçал 700 гектар вырма сăмах парса, ăмăртăва хутшăнчĕ. Малтанхи кунсенчех вăл хăйĕн пысăк пултарулăхне ĕçре кăтартрĕ: кунне 19—24 гектар вырса пычĕ.

Гинатуллин йулташ пуçарса йанă социалисамлă ăмăртăва „Первое мая" колхоз членĕсем хутшăнчĕç. Вĕсем тырпула кĕске срукра, пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Илчендей Ваḑуков, Ксенийа Пимуковă, Аḑтук Йакăвлевă, Марийа Уḑдийаровă, Силдеби Дмитриевă,—пурте кĕлте çыхас нормăна 200 йе 350 процент тултарса пыраççĕ: 0,33 гектар çыхас вырăнне 0,60—1,50 гектар çыхаççĕ.

Колхоз çĕнĕ тырра государствăна 500 центнĕр леçрĕ. „Первое мая" колхоз членĕсем вирçĕ республика ăмăртăвĕнче мала тухма шанса ĕçлеççĕ.

Гр. Кондратйĕв.

Икĕ колхоз— икĕ тĕслĕх

Именкассинчи „Малала" колхоз (Трак р.) тырпулсене уйран пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕрес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Кĕрхи тырăсене 7 кун хушшинче, ийулĕн 31-мĕшĕнче вырса пĕтерчĕ.

Колхозра пурĕ 6 бригада. Бригадăсем пĕр-пĕрипе социалисамла ăмăртса ĕçлеççĕ. бригадăри колхозниксем куллен ĕç нормисене 150 процент тултарса пынă. Алăпа 400 кĕлте вырмала, Степанăвă, Куçмина, Скворцовă колхозницăсем 750 шар кĕлте вырнă. Тырпула уйран пуçтарса кĕнипе пĕрлех государствăна ыраш парса татнă.

„Малала" колхозпа Серткассинчи „Майак" колхозсем ыраш кĕлтисене августăн 6-мĕшĕнче турттарса капана хывса лартнă. Халь колхозниксемпе колхозницăсем çуртри вырăççĕ.

Уйра куḑтмассăлă ĕçе лайăх йĕркелене. Каннă вăхăтра политвулавçăсем хаçат-журналсем вуласа пăраççĕ. Çĕнĕ зайом, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи ĕçсем çинчен тата Испанири вăрçă çинчен ăнлантарса параççĕ. Çтена хаçачĕсем кашни бригадăрах йĕркелĕн тухса пырса, ĕçри çитменлĕхсем çинчен çутатаççĕ.

Колхозра столовăй организацилеве. Кашни кун аш-йашкисем пĕçереççĕ, ачасем ваḑḑи йаслĕ уçнă. Унта пурĕ 76 ача.

Çав хушăрах Йӳçкассинчи Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз йулса пырат. Колхозăн пĕр жнейка пур, унпа пачах усă курмаççĕ. Ку колхоз пайанхи кун та государствăна ыраш парса татман, пурĕ 27,75 центнĕр памала пулсан, 25,55 центнĕр кăна панă.

Кунта куḑтурăлă массăлă ĕç те пачах сӳнсе ларнă. Агитатăрсемпе политвулавçăсем ĕçлемеççĕ, çтена хаçачĕ те тухмаст. Тырă хумали складсем 5, вĕсене халь те дезинфекци туман-ха.

С. Константинăв.

Комбайнсемпе йапăх ĕçлеççĕ

ШĂХАСАН. Комбайнсем ийулĕн 22-мĕшĕнче ĕçлеме тытăнчĕç пулин те, пайанхи куна çитсе те вĕсемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. 1-мĕш бригадăри комбайнер Алефзинтйĕв йулташ хăйне çирĕплетсе панă комбайнпа августăн 1-мĕшĕнче Атнашри Кирăв йачĕпе тăракан колхоз хирĕнче ĕçлеме тытăнчĕ. Вăл 3 кун хушшинче мĕн пурĕ те 10 гектар çеç тулă вырнă, 4-мĕш кунне пачах ĕçлеймен.

Çавнашкалах 2-мĕш бригадăри Оçипăв комбайнер та 4 кун хушшинче 18 гектар ытларах çеç пуçтарнă.

Комбайнсемпе йĕркелĕ ĕçлейменни вăл—МТС дирекцийĕ айăпĕпе пулса тăнă, мĕншĕн тесен комбайнерсене тĕплĕн вĕрентсе хатĕрлемесĕрех çавăн пек пысăк машинăпа ĕçлеме кăларса йанă.

Йелчĕкре суту-илӳ тума пĕлмеççĕ

Йелчĕкри суту-илӳ организацийĕсем çак вăхăта çитсе те хăйсен ĕçĕсене ПСК(б)Парти Чăваш Обкомĕпе Халăх Комисарĕсен Совечĕ йышăннă постановленине кăтартнă пек туса пыма тытăнман. Райпотребсойуз суту-илӳ ĕçне лайăх кадрсене, тĕрĕсленĕ çынсене хутшăнтарма тăрăшмаст. Кадрсен учочĕ çук, суту-илӳ ĕçне кĕнле çынсем туса пынине пĕлмеççĕ. Çавна пула ĕнтĕ государствă дисциплинине пăсисем, растратăсем час-часах пулаççĕ. 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшнĕ районепе илсен 15.464 тенкĕ растратă шутланнă. Растратчиксемпе çителĕкле кĕрешмеççĕ. Çавăн пирки кăçал каллех 9.607 тенкĕ растратă тунă.

Кооператив укçине çаратакансенчен суд урлă укçа шыраса илесси питĕ начар пырат. Иртнĕ çулти растратăна 1-мĕшпе 2-мĕш квартăлсенче 9.607 тенкĕ çес шырас илнĕ. Лаш Тайапари йалпо ваḑḑи суд урлă 11.761 тенкĕ шыраса илмеле йышăннăччĕ. Анчах çав укçана халĕ те шыраса илмен.

Халăхи вăхăтра тавар çавăрнăш планне тултарма кирлĕ условисем пурте пур. Апла пулин те Йелчĕк районĕн центрĕнчи магазин 2-мĕш кварталти тавар çавăрнăш планне 77 процент, Лаш Тайапари йалпо 76 процент çеç тултарчĕç. План тулса пыманни вăл куллен кирлĕ таварсене кӳрсе килсе сутманрин килет. Уйра хĕрӳ ĕçсем пынă вăхăтра Лаш Тайапари йалпора манăйкерпе, макарон, сухари, канфет, тăвар, спичка, кăраççин тата ытти таварсем те пулмарĕç. Ку таварсем пур çинчех йалпо председателĕ кондитĕр таварĕсен счочĕ çук тесе, 12 кун хушши лавкасене таварсăр тăратнă. Аслă Пăла Тимешри лавкара махоркă çуккипе пула колхоз иксем тырă вырнă вăхăтра махоркă илме 6—7 çухрăма—Тутар республикине çӳрерĕç.

Районри чылай лавкасенче прейскурантсем çук. Йелчĕкри куḑтурăлă таварсемпе суту-илӳ тăвакан лавкари прикашчикрен Каççирăвран:—Мĕншĕн сирĕн лавкара прейскурант çук?—тесе ыйтсан:

— Манăн прейскурант пуçра,— тесе ответлет. Ку лавка та питĕ йапăх ĕçлет. Кунта 1938 çулта тухнă кĕнекесене тупса илме çук. Районра суту-илӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе парти райкомĕн ларăвĕнче те решени йышăннăччĕ. Анчах ĕçре улшăну çук-ха.

А. Романăв.

Çирĕп йĕрке çук

Шăхасан районĕнче суту-илӳ ĕçĕнче халăх тăмшанĕсем тунă сăтăрлăх йулашкисене пĕтерессишĕн çителĕксĕр пулса пырат. Суту-илӳ ĕçĕнче халĕ те çирĕп йĕрке çук. Районĕпе илсен иккĕмĕш квартăлти таварçавăрнăш планне 90 процент çеç тултарнă.

Шăхасан йалповĕн лавкасен хисепне нумайлатмала, анчах хăшпĕр лавкасене хупса пĕтерчĕ. Йалпо председателĕ Гаврилăв айăпĕпе Ухманри лавка 5 кун, Атнашри лавка 15 кун хупă тăнă. Чалкассинчи лавкана ийулĕн 3-мĕшĕнче хупнă та пайан кунччен-х хупă тăрат. Суту-илӳ ĕçĕнчи работниксем хушшинче дисциплинă çук. Сител лавкинчи прикашчик И. Андрейĕв лавкана пĕр ерне хупă тăратнă, хăй ĕçкĕре çӳренĕ.

Шăхасанти столовăйĕнче çитменлĕхсем нумай. Столовăйне ирхине 9 сехетсĕр те уçмаççĕ, каçхине часах хупаççĕ. Çулахи шăрăх кунсенче квас, çитро пулмарĕ.

Шăхасанти йалпо растратчиксемпе кĕрешмест. 1936 çулта тунă растратăна 483 тенкĕ, 1937 çулхи растратăна 6 650 тенкĕ пайан кун та шыраса илмен. Çакăр сутакан лавкари прикашчик А. Соловйов кăçал 2 842 тенкĕ растратă тунă. Çав укçана шыраса илесси çинчен шутламаççĕ те. Растратчиксемпе тивĕçлипе кĕрешменнине пула халĕ те растратă тунисем палăраççĕ. Акă, Кăшнаруй лавкинчи прикашчик М. Мартынăв çак çулхи иккĕмĕш квартăлта 2.075 тенкĕ, Сурăм лавкинчи прикашчик Сорокин 700 тенкĕ растратă тунă. Ытти лавкасенче те растратăсем туни пур. Растратчиксен ĕçĕсене суд аллине паман, йалпо председателĕ Григорйев вĕсене хӳтĕлесе тăрат.

Çак çитменлĕхсем суту-илӳ ĕçĕнче çирĕп кадрсем çуккинчен килеççĕ. Хăшпĕр вырăнсенче пĕрре растратă тунă çынах кооперативра ĕçе илеççĕ. Акă, Шăхасанти йалпо çăкăр лавкинче ĕçленĕ чухне растратă тунă Соловйова каллех ĕçе илнĕ. Вăл вара татах 2.842 тенкĕ растратă тунă.

Пайщиксем панă сĕнӳсене хисеплемеççĕ. Колхозниксем государствăна тырă панă вăхăт ваḑḑи 4 вырăнта ĕçмели шывсемпе квас сутмали киоксем уçмала тенĕччĕ, халĕ районра пĕр киоск та çук.

Дм. Иванов.

Таварсене вăхăтра кӳрсе килмеççĕ

Уйри тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра йалпосен хăйсен ĕçне уйрăмах вăйлă туса пымала. Колхозниксене кирлĕ таварсене уйа илсе тухса сутмала. Уйри тырпулсене пухса кĕме тухас умен йалпо председателĕсен канашлăвĕнче кун çинчен пур çĕрте те хытăн асăрхаттарнă.

Апла пулин те, Чулкăмака йалповĕ (Шăхасан р.) колхозниксене кирлĕ таварсене уйа илсе тухса сутас ĕçе йĕркелемерĕ. Анат Вăрмăнкел, Вăтакас, Кипеч, Чулкăмака, Ăнтавăш уйрăмĕсенчи продавецсем таварсене пĕре те уйа илсе тухса сутман. Лавкасенче премĕк, печени, конфетсем сайра хутра çеç пулаççĕ. Сушкă пĕçерсе сутас ĕç те çителĕксĕр. Таварсене пасарсенче тата уйра ĕçлекенсем патне тухса сутманнипе Кипеч уйрăмĕнче сушкăна тиентсе йарсан пĕр уйăхран тин сутса пĕтерчĕ. Чул Кăмакари продавец Федарăв халĕ 3 кун лавкана уçмарĕ, ӳсĕр çӳрерĕ.

И. Д.

Куḑтурăлă совет суту-илĕвĕшĕн

Çĕршывра тавар çавăрнăшне сарса йарас ĕçе партипе правительствă куллен пулăшса пыраççĕ тата ун çине пысăк тимлĕхпе пăхаççĕ. Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе иккĕмĕш пилĕкçуллăх хушшинче тавар çавăрнăшне ӳстерес ĕçре питĕ пысăк çитĕнӳсем тунă. 1932 çулта государствă тата кооперации вакки суту-илĕвĕн оборот сумми 40,3 мĕлйард тенкĕ пулнă, 1937 çулта—125 мĕлйард тенкĕ, кăçалхи çул вăл 140,5 мĕлйард тенке çитмелле. Çак çулсем хушшинче потребителсене чи кирлĕ таварсен, куḑтурă таварĕсен хисепĕ пит нумай ӳсре, ассортимент нумайланчĕ тата таварсен пахалăхĕ лайăхланчĕ. Сталинла иккĕмĕш пилĕкçуллăх хушшинче çĕршывра питĕ нумай магазинсем, лавкасем туса лартнă, вĕсенчен пĕр пайне суту-илĕвĕн кучуххеки техники хатĕрсемпе тунă.

Йалсенче таварсем илесси татăкланах улшăнчĕ. Халь колхозри хресченсем пит нумай çĕнĕ таварсем илеççĕ. Пуйан пурнăçлă колхозлă вăл таварсем кунран-кун ытларах ыйтат.

Халăх ырлăхĕшĕн, ĕççыннисен пурнăçне малалла та лайăхлатса пырассишĕн тăрăшса, партипе правительствă таварсен хакĕсене пĕрмайах йӳнетес политика тытса пыраççĕ. 1935—1936 çулсенче государствă, кооперации тата колхоз суту-илĕвĕнче таварсен хакĕсене йӳнетни ĕççыннисене 10 мĕлйард тенкĕ ытла перекет пани çинчен калани те çителĕклĕ. 1937 çулта чылай промтаварсен хакне палăрмалла чакарнă. Вăл та ĕнтĕ ĕççыннисене пит пысăк перекет парĕ.

Совет суту-илĕвĕ пĕтĕмпех халăхшăн. Сталин йулташ ССР Сойузĕнчи Совечĕсен Чрезвычайнăй VIII мĕш Съесĕнче тунă докладĕнче, пирĕн çĕршывăн хуçалăхĕнче пулнă улшăнусем çинчен каласа: „Çĕршыври тавар çавăрнăшне илсен, ку таврашран купцасемпе спекуḑянтсене пĕтĕмпех хăваласа кăларнă. Мĕнпур тавар çавăрнăшĕ халь государствă, кооперации тата колхозсен аллинче. Çĕнĕ, совет суту-илĕвĕ, спекуḑянтсемсĕр суту-илӳ, капиталиссемсĕр суту-илӳ пуçланса, аталанса карĕ", тесе кăтартса парĕ.

Тавар çавăрнăшне ӳстерес ĕçре тунă пит пысăк çитĕнӳсем ССР Сойузĕн пĕтĕм халăх хуçалăхĕнчи хăвватлă çĕкленĕве палăртса тăраççĕ. Вăл çитĕнӳсем социалисамлă индустрипе социалисамлă йалхуçалăхĕ лайăх чечекленнин резуḑтачĕ, ССР Сойузĕн пултарулăхĕпе пуйанлăхĕ ӳсни, халăх тупăшĕ, ĕççыннисен пуйан пурнăçĕ ӳсни резуḑтачĕсем пулса тăраççĕ.

1938 çул социалисамлă индустрипе социалисамлă йалхуçалăхĕ малалла ӳсĕмсем туса пынă палăрса пуçланчĕ. Промышленнăç продукцийĕ туса кăларас хăвăртлăх тата çак шутрах анат-çимĕç продукцисемпе куллен кирлĕ таварçем туса кăларассин хăвăртлăхĕ те уйăхран уйăхах ӳсе пырат. Çапла, 1938 çулхи йанвар уйăхĕнче промышленнăç продукцийĕ 1937 çулхи йанвар уйăхĕнчипе танлаштарсан 5,5 процент ӳснĕ, февралĕнче—9 процент, мартра—12 процент, апрелĕнче—15 процент ӳснĕ.

Çĕршывра сталинла вăйлă тырпула пухса кĕртес ĕç пырат. Тырпула пухса кĕртес ĕçе болḑшевикла организацилени колхоз хресченĕсен пуйан пурнăçне тата та ытларах ӳстерĕ,—ун пирки нимĕн иккĕленмели те çук.

Сталинла халăх комиссарĕ Л. М. Кагановичă йертсе пынипе чукун çул транспартĕнче тунă пахă çитĕнӳсем хулапа йал хушшинче, çĕршывăн районĕсемпе облăçĕсем хушшинче, халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отрăçлĕсем хушшинче тавар çавăрнăшне лайăх сарса йама чи аван условисем туса параççĕ.

Партипе правительствă суту-илӳ работникĕсем умне совет суту-илĕвĕ кайа йулнине пĕтерес, ĕççыннисем хушшинче пĕр чăрмавсăр тата куḑтурăлă суту-илӳ тăвас, ССР Сойузĕнчи граждансем ыйтнине çителĕклĕ парас задачă лартрĕç. Правительствă çак çулта ваккăн суту-илӳ 140,5 мĕлйард тенкĕлĕх пулмалла плана йышăннă, çак плана (вăл 1937 çулхи планран 12,2 проц. ытларах) тултармалах. Ăна иртерсе тултарма та условисем пур. Пирĕн çĕршывра таварсен хисепĕ çулран çулах, уйăхран уйăхах ӳсе пынă, вырăнсенчи усă курмасăр йулакан питĕ пысăк ресурссем, совет хуçалăхĕ план тăрăх пулса пыни—çаксем пурте суту-илӳ работникĕсен çарне ответлă задачăна чыслăн пурнăçлама тата пĕтĕм суту-илӳ ĕçĕн пахалăхне татăклăнах ӳстерме май параççĕ. Ĕç суту-илӳ кадрĕсенче хăйсенче, вĕсен пуçарулăхĕнче, çĕнĕле, болḑшевикла ĕçлес килнинче тата ĕçлеме пĕлнинче пулат.

Совет суту-илӳ работникĕсен тĕп масси вăл—Ленин—Сталин ĕçне, пирĕн социалисамлă тăван çĕршыва йĕпе парăннă çынсем. Вĕсем тӳрĕ ĕçлеме, тăван ĕçе, болḑшевикла ĕçе чăн-чăн пурнăçа кĕртекенсем пулма тăрăшаççĕ. Лавкасенчи ударниксемпе стахановецсем тавар илекенсемшĕн чăн-чăн тăрăшнине кăтартаççĕ. Хуласенчи магазинсем, йалсенчи лавкасем тата столовăйсем чылайĕшĕ сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавне тавар çавăрнăш планне срукчен тултарнипе, тавар илекенсемпе ĕçлессине лайăхлатнипе кĕтсе илчĕç. Анчах суту-илӳ ĕçĕн руководителĕсем, суту-илӳ работникĕсен политикăлă тата производствăлă активлăхĕ нумай ӳсни пулин те, ăна малалла та сар а пыма, суту-илĕвĕн пĕтĕм фронтĕнче—хуларта тата йалта та—çитенӳ тума пултараймарĕç.

Суту-илӳ органĕсем çаплах йапăх ĕçлесе пыраççĕ ха. Пĕрремĕш çурçул планне чылай тултараймаи. Куллен кирлĕ таварсемпе суту-илӳ тăвас ĕçри чăрмавсене, пĕр районта таварсем ытлашши выртса тепĕр район çав таварсемсĕр йулнисене—çав киревсĕр фактсене пĕтермен ха. Таварсене вырăнсене вĕçтакан бӳрократла организацисен складĕсенче таварсене пит нумай вăхăт выртарнисем те пайтах пулаççĕ. Сатăрла мазинацисен çăмхине вĕçне çитиех салатса тăкман-ха, çавна пула çителĕклĕ пулмали таварсемех вырăнсенче çителĕксĕр, дефицитлă таварсем пулса тăраççĕ. Йалти районсенче, уйрăмах инçетри районсенче, Совет Сойузĕн инçетри чылай хулисемпе облăçĕсенче суту-илӳ ĕçĕ çителĕклĕ пулса пымаст. Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ тата уйрăмах Тĕппотребсойуз инçетри хулисемпе районсене, унта ĕççыннисем ыйтнине хаклăмисăр, таварсене кирлĕ пек кӳрсе килмеççĕ.

Ку ĕçĕн тымарĕсем пуринчен малтан çакăнта: ССРС Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ те, Тĕппотребсойуз те, çавăн пекех вĕсен вырăнсенчи нумайĕш органĕсем те, халăхăн пуçсĕр тăшманĕсем суту-илӳ органĕсенче тунă сăтăрла ĕçсен йулашкине пĕтерессишĕн болḑшевикла кĕрешмеççĕ. Халăхăн тискер тăшманĕсем—Зеленскисем, Вейцерсем, Болотинсем—йурийех пĕр районсенче таварсем çитми тунă, тепĕр районсенче вĕсене ытлашши выртарнă, продуктăсене пăсса, çĕртсе пĕтернĕ, пирĕн çĕршывра туса кăларакан таварсен нумайрах пайĕ потребитĕл патне ан çиттĕр тесе пур тĕрлĕ ирсĕр ĕçсем те тунă.

Пирĕн чаплă совет разведки сталинла Халăх Комиссарĕ Николай Иванович Йежов йертсе пынипе çĕршывăн тавар аппарачĕсенчи троцкисла бухаринла тата ытти сăтăрçăсемпе диверсантсен ирсĕр шайкине çĕмĕрсе тăкрĕ. Анчах Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕпе Тĕппотребсойуз руководителĕсем политикăлă тивĕçлĕ уроксем туман, сăтăрла ĕçсен йулашкине пĕтерме, тăшмансен йулашки хурешкисене тăпăлтарса тăкма татăклă кĕрешӳ туса иртермен.

ССР Сойузĕн Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн, Тĕппотребсойузăн, Мускав хулинчи суту-илӳ управленин тата суту-илĕвĕн ытти органĕсен аппарачĕсенче те питĕ кирлĕ постсенче йулашки вăхăтченех халăх тăшманĕсем ларнă. Тĕрлĕ мăйăмпа витĕнсе, Суту-илӳ Халăх Комиссариатĕнче, Тĕппотребсойузра тата вĕсен вырăнти органĕсенче çак кунччех пуç пулсă тăракан илнотлă чирпе—политикăлă тимсĕрлĕхпе усă курса, фашиссене тара кĕрешнĕ троцкисла-бухаринла шайкă тавар çавăрнăшне плансăр ĕçе пăтраштарса, вырăнсене тавар йарассине, халăх ваḑḑи чи кирлĕ таварсем тăратассине çаплах чăрмантарса пынă.

Йертсе пырас ĕçре сăтăрçăсем сĕтерсе кĕнĕ çĕрĕк меслетсемпе усă курассине ку таранччен пĕтермен-ха. РСФСР, Украинă ССР, Белорус ССР, чылайĕш ытти сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен çессийĕсенче суту-илӳ органĕсен тата вĕсен руководителĕсен ĕçне мĕншĕн питĕ хытă критиклени çакăнтан та паллă.

Суту-илӳ организацисен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл—таварсен фондне плансăр ĕçре кашни районăн економикăлă кăтартуне, районри халăхсем мĕнле тавар ыйтнине шута илменни пулса тăрат. Çак тăмшанла практикă тăсăлса пынă пирки йалсенче нумайĕш вырăнсем, уйрăмах инçетри районсем, хăйсене кирлĕ таварсемсĕр тăрса йулнă, çавăн пекех тата пит кирлĕ промышленнăçлă пунктсемпе новостройкăсенчи магазинсем чылайĕшĕ пушанса йулнă. Таварсене пĕр пек мар валеççе вырăнсăтарас, вăккăн суту-илӳ тăвакан пĕр-пĕр магазине нумай парса магазинсен тĕп массине таварсăр хăварас практикă та çаплах тăсăлса пынă.

Куллен кирлĕ таварсемпе суту-илӳ тăвасси чылай облăçсемпе хулисенче чăрмавлă пулса пыни суту-илӳ органĕсенче чылайĕшĕнче тăшманла вăл ĕçлеме чăрмантарнине усăсăр кăтартсе парат. Пирĕн çĕршывра çĕнĕ лапасĕ пит пысăкки пуринпĕ те паллă, ça-

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти вĕренĕвне йертсе пымаççĕ

ЙĔПРЕÇ. Вăрманпромхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче Рыжова, Цицуонкин, Саперăв, Данилăв, Çеменăв коммунистсем нисçта та вĕренмеççĕ. „Кооплеспром" ертелĕ çумĕнчи парторганизацинче парти членĕсем 5 çын, вĕсем хĕлле парти историне вĕренмели кружокра çӳренĕ, халь вĕренме пăрахнă. Елеç йалсоветĕнчи парторганизацинче парти членĕсем 5 çын, 2 кандидат, вĕсен Кĕлĕмкассинчи кустри кружока çӳремеле. Анчах вĕсем унта çӳремеççĕ.

Парторг Алексеев хăй те хĕл касиччен нисçта та вĕренмен. Халь анчахăна Шупашкара курса йанă.

Районра пĕччен коммунистсем 15, вĕсем те çуллахи вăхăтра пачах вĕренмеççĕ.

Занятисене çӳрекенсен шучĕ чакса пырать. Акă, ленинисăма вĕренмели кружока, райкомри сведенисем тăрăх та 63 процент анчах çӳреççĕ. Уйрăмăнах В. В. Малицкайа, Орлов, Миленцейĕв йулташсем занятисене çӳреме йуратсах каймаççĕ. Занятисене çӳремен коммунистсем çинчен нумай пуçламĕш организацисенче сӳтсе-йавмаççĕ.

Кружокра вĕренекенсем хăйсем тĕллĕн ĕçлессине организацилемен, вĕсем нумайĕшĕ занятисене хатĕрленмесĕр пыраççĕ. Сăмахран, Кĕлĕмкассинчи кустри парти историне вĕренмели кружок районра малти вырăнта тăрать, кунта çуллахи вăхăтра та занятисем йалан пулса иртеççĕ, анчах ку кружокра та занятисене хатĕрленсе пыманнисем нумай (Шемйакин т. ыт. те). Вĕсене пропагандис Прокопьев та çителĕклĕ пулăшмасть-ха. Занятисене хатĕрленес ĕçре вĕренекенсене районри парткабинет та кирлĕ пек пулăшу памасть.

Уйрăмăнах сочувствуйушчисене политикăлă воспитани парасси çителĕксĕр тăрать. Районра 42 сочувствуйушчи. Вĕсем валли политграматăна вĕренмелли 4 кружок организациленĕ. Кусенчен икĕ кружок анчах ĕçлеççĕ. Тукайри тата Андрӳшĕвăри кружоксенче ĕçлеме райком хăйĕн инструкторĕсене Маркийанăвпа Родзйанăв йулташсене çирĕплетнĕ пулнă. Анчах вĕсем кружоксен ĕçĕсене сӳнтерсе ларнă, пĕр занятти те туман.

Иртнĕ кĕркунне тата марксисăм-ленинисăм классикĕсен уйрăм произведенисене вĕренмели кружок органазациленĕ пулнă, унта 10 çын вĕреннĕ, халь ку кружок саланса кайнă. Заочнă вĕренекен коммунистсем валли икĕ кружок организациленĕ, ку кружоксем хăйсен программине пурнăçланă. Малала заочнă вĕренсе пĕтерне коммунистсене ăçта вĕрентмелине райком пăхса тухман-ха.

Парти райкомĕ пропагандиссене çителĕклĕ йертсе пымасть. Пропагандиссемпе темиçе уйăх хушши çеминар туса иртермен.

— Пире пухса калаçнине епĕ астумастăп,—тет штатлă пропагандис Прокопьев. Хăшпĕр кружоксенче пропагандиссем йаланах улшăнса тăраççĕ. Сăмахран, Йĕпреçри парти историне вĕренмели кружокра малтан пропагандис Йевгенийев пулнă, унтан Тугарйов тата Йегорăв йулташсем пулнă. Тукайри политграмăтă кружокĕнче малтан Захарăв пропагандис пулнă, унтан Маркийанăв, халь ку кружокра пропагандис çук. Нумай кружоксенче учебниксем, вĕренмели пособисем çитмеççĕ. Кружоксене учебниксем тупса парас пирки, калас пулать, ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕ Сергейев йулташ та ним те туман. Пропагандиссене темиçе районран пухса канашлу тăвас пирки те пропагандăпа агитаци пайĕ шухăшламасть пулмала.

А. Михайлăв.

Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займĕ

Малтанхи тӳлев

Шупашкар хулинчи ĕççыннисем хушшинче займа çырăнас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Кунта иртнĕ çулхи займ августăн 5-мĕшне 1 839 пин тенкĕлĕх сарăлнăччĕ. Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне 2.393.350 тенкĕлĕх çыранна.

Халĕ займшăн укçа пухас ĕç пырать. Ийуль уйăхĕнчи ĕç укçинчен тытса йулнă займ укçине хулари коллективсем йĕнĕпе тĕп перекет кассине 129 000 тенкĕ хывнă. Çак шутран урам комитечĕсенчи займ уполномоченнайĕсем 3.406 тенкĕ укçа пухреç.

Çапах та займ укçине пухасси çителĕклĕ пымасть-ха. Хăшпĕр коллективсенче рабочисемпе служащисенчен илнĕ займ укçине кучармасăр тăраççĕ. Ку ĕнтĕ инструкцине пăхăнманни пулать. Займ укçине вăхăтра куçарса пыни кирлĕ.

Й. Филиппăв.

Ĕçе вĕçлемесĕрех лăпланнă

Турхан районĕ Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займа сарас ĕçре йулса пырать. Иртнĕ çулта „ССР Союзĕн Оборонине тĕреклетмели займ" 232 пин тенкĕлĕх сарăлнă. Çĕнĕ займа августăн 4-мĕшне илсен 216 пин тенкĕлĕх çеç çыраннă. Район займ сарас ĕçре йалсем йенĕпе йулса пырать.

Районра займ уполномоченнайĕсем тивĕçлипе ĕçлеме тытăнман. Финанспа банк ĕçĕнчи работниксем те ĕçе начар хутшăннă. Комсодсем йапăх ĕçлеççĕ. Çакна пула ĕнтĕ займа çырăнас тата укçа пухас ĕçсем питех те кайа йулнă. Уйрăмăнах ку ĕç килхуçи хĕрарăмсемпе йединоличниксем хушшинче начар пырать.

Массăла ăнлантару ĕçне лайăх йĕркелесен займ сарасси ăнăлăн пыма пултарать. Анчах та районри чылай организацисем çакна ăнланса илмен ха.

А. А Мосолов.

Займ хроники

ИШЛЕЙ Шетмĕпуç йалсоветĕнчи „Çĕнĕ хунав" колхозра займ уполномоченнайĕсем займ çырăнтарас, займ укçи пухас тĕлĕшпе пĕр пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Халĕ вулав çурт пуçлăхĕ Йевдокимăв йулташ Ключникăв йулташпа ăмăртса ĕçлесе 1000 тенкĕлĕх сарнă, Ключникăв йулташ 945 тенкĕлĕх сарнă. Йалсоветĕпе 5 600 тенкĕлĕх çыраннă. Осипăв, Никитин колхозниксем 100-шер тенкĕлĕх займ çырăнса илнĕ.

Йалсоветĕнче займа çырăнассипе пĕрлех займ укçи пухас ĕç те лайăх пырать. Паянхи куна çĕнĕ займ укçине 3670 тенкĕ пухнă.

Ал. Çмирнов.

КАНАШ. Асхва йалсоветĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне 4600 тенкĕлĕх çыранчĕç. Займ сарас тĕлĕшпе займ уполномоченнайĕсем И. Макарăв, Ф. Михайлав, Г. Гордейев, И. Филиппăв йулташсем тăрăшса ĕçлереç. Халĕ займ уполномоченнайĕсем займ укçи пухас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

И. Федăрăв.

Производствăри йĕркелĕхшĕн

Канашри сĕтел-пуканcем тăвакан хапрăк Чăвашкульпромсойуз системинче чи пысăк предприйати шутланать. Хапракăн кăçал сойуз пĕрлештерсе тăракан ертелсем кăлармалли продукци хисепĕнчен 20 процентне кăлармала. Халĕ хапрăк начар ĕçлет-ха. Хăйĕн çурçулти планне 52 процент çеç тултарнă. Ийуль уйăхĕнчи уйăхĕсенчен чухлĕ те пулин палармалăх ĕçсем туман.

Хапрăк çавнашкал начар ĕçленин сăлтавĕ ĕçлеме условисем пулманнинче мар, производствăна йĕркесĕр организацилениче тăрать. Хапрăкра производства процесне йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлетпĕр, текен çынсем сахал мар. Анчах вĕсем ĕçре ответлăха туймаççĕ, хăйсен ĕçне пуринчен ытларах сăмахпа туса пыраççĕ. Инженер Григорйев технологи процесне йĕркелес пирки нумай калаçать. Ĕçĕ куранмасть-ха. Продукцисем кăлармали плансем çук. Чĕрĕ таварсемпе мĕнле усă курнине тĕрĕслесе пымаççĕ. Чĕрĕ таварсен хисепĕнчен миçе процент продукци тунă çĕре кайни, миçе процент отхода тухни те паллă мар. Уйрăм станоксем мĕн чухлĕ продукци кăларма пултарни çинчен те пĕлмеççĕ. Техникă йенчен йертсе пыракансем хăйсен ĕçĕ çине çийелтен пăхнă пирки, техникăла браксем нумай пулаççĕ. Çакăн çинчен хапрăк, çавнашкалах Чăвашкульпромсойуз руководителĕсем те лайăх пĕлеççĕ.

Социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăм плана тултарассине татса паракан пысăк вăй пулса тăраççĕ. Анчах хапрăк руководителĕсем ку йенĕпе те ĕçлемеççĕ. Рабочисене ăмăртăва йавăçтарман. Хапрăкри цехсем хушшинче ăмăрту договăрĕ туни те пулман. Рабочисем, бригадăсем, сменăсем мĕнле ĕçленине куллен шута илсе пымаççĕ. Кам мĕнле ĕçленине пĕлме çук кунта. Учотчиксем кам ĕçе тухнине кăна шута илеççĕ.

Рабочисене ĕç нарйачĕсем вăхăтра парса пымаççĕ. Çавна пула рабочи уйăх иртнĕ хыççăн çеç хăйăн ĕçĕсем çинчен пĕлет. Вара йăнăшсене тӳрлетме нормировщик Денисăв патне пыраççĕ: „Мĕн чухлĕ çырса паратăп, çавăн чухлĕ илетĕн" тенисĕр пуçне урăх нимĕн те илтейместĕн.

Склад хуçалăхĕ мĕнле ĕçленине никам та тĕрĕслесе пымасть. Чĕрĕ таварсем хатĕрлетпĕр теççĕ, укçа-тенкĕ нумай расхутлаççĕ, çапах усси çук. Таварсене упаковкă тума чăпта кирлĕ, кунта чăпта хатĕрлемеççĕ.

Культурăлла-массăлла ĕç çине никам та çаврăнса пăхман. Культработник пулнă Гордейев хăйĕн вăхăтне хаçатсем салатса çӳренипе иртерне. Руководительсем критикăпа самокритикăна йуратманни рабочисен пуçарулăхне пăчлантарса пырать. Пухусем пулсан цех начальникĕсем, мастăрсем çеç калаçаççĕ.

Хапрăкра финанс дисциплинине пăснисем те сахал пулман. Учот ĕçне йĕркелĕ туса пыманнине пула укçа-тенкĕне салатасси хытă сарăлнă, растратăсем нумай пулнă. Растратчиксенчен шыраса илесси халĕ те начар пырать. Ĕç укçине те вăхăтра тӳлемеççĕ.

Çак йĕркесĕрлĕхсем Чăвашкульпромсойуз руководителĕсен куç умĕнчех пулса пыраççĕ. Анчах кульпромсойуз вăл йĕркесĕрлĕхсене пĕтерсе хапрăка йалан лайăх ĕçлекен тăвас тĕлĕшпе начар тăрашать.

Халĕ хапрăк руководствинче çĕнĕ çынсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хапрăк ĕçне лайăхлатассишĕн пысăк тимлĕхпе тăрăшаççĕ. Вĕсене йалан пулăшса, вĕрентсе пымала. Анчах кульпромсойуз руководителĕсем халĕ те киве йăлапах ĕçлеççĕ. Конкретлă йертсе пыни, ĕçре пулăшни курăнмасть.

П. Ш.

Стахановла ĕçлекен бригадăсем

Çĕнĕ стройкăсене ĕçлеме тухнă колхоз çамрăкĕсем строительствăн ĕçĕн техникине пысăк хастарлăхпа, çине тăрса вĕренсе пыраççĕ. Техникăна алла илнĕ çамрăксем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме пуçлареç. Шупашкарти çĕнĕ стройкăри Силверстăв йулташ йертсе пыракан бригада членĕсем пурте нормăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Силверстăв йулташ 216 процент, Йегор Дмитрийăв 200 процент, А. Федăрăв 190 процент тата А. Семенăв 125 процент тултараççĕ. Ку бригадăна стахановла ĕçлекен бригада тесен тĕрĕс пулать. Бригада хăйĕн планне 185 процент тултарса пырать.

Стройкăсенче Силверстăв йулташ бригади пек пысăк тухăçлăхпа ĕçлекенсем сахал мар. Петров йулташăн 60 çынтан тăракан платниксен бригади нормăна 160 процент таран пурнăçа кĕртсе пырать. Ку бригадăра 13 стахановец шутланать. Петров йулташ халĕ бригада членĕсене пурне те стахановла ĕçлеме вĕрентессишĕн тăрăшать.

В. Дмитрийĕв.

34 çул производствăра ĕçлет

Смолăв йулташ производствăра ĕçлеме пуçланăранпа вăтăр тăватă çул иртрĕ. Йевгений Павлăвич çак хушăра нумай çĕрте ĕçлесе курнă. Вунсичĕ çула çитсенех Саратăври Коробăв хуçа патĕнче ĕçлеме пуçланă. Ĕлĕк мĕнле ĕçленĕ, мĕнле пурăннă? Ун çинчен Йевгений Смолăв çапла аса илет.

— Çĕрĕн-кунĕн ĕçлеттĕмĕрччĕ,—тет вăл,—анчах пирĕн ĕç укçине тенкĕпе мар, пуспа кăна шутланă. Кун каçиччен 15—16 сехет ĕçлесе те 10—15 пус çеç илнĕ. Тăрăнмиччен апат çисе курман, çийе лайăх тумтир кемен. Пурăнаттăмăрччĕ выçăла-тутăла...

Халĕ Йевгений Смолăв Стройтрестăн кăсккăлăкан савăтри детальсем пуçтакан цехра бригадир пулса ĕçлет. Бригадăра 6 çын, пурте çамрăксем. Унăн бригади цехри лайăх ĕçлекен бригадă шутланать. Плана йалан 180 процентран кайа мар тултарса пырать.

Смолăв йулташ общественлă ĕçре те активлă ĕçлет. Вăл профорг, постройком членĕ. Кану вăхăтĕнче рабочисене хаçат журналсем вуласа парать. Çамрăксене мастăр пулса ĕçлеме вĕрентет.

— Манăн пурнăçра ĕлĕкхи йăвăр пурнăçăн пĕр тĕпренчĕкĕ те çук. Енĕ уйăхне вăтамран 400 тенкĕрен кайа мар ĕç укçи илетĕп. Ку укçа лайăх пурăнма кăна мар, пурнăçа культурăлла йĕркелеме те çитет. Манăн ачасем шкулсенче вĕренеççĕ. Епĕ хам та вĕренетĕп,—тет Смолăв йулташ савăнса.

Т. Иванов.

Суту-илӳ ĕçне лайăхлатассишĕн кĕрешӳре

П. Д. Калашникăв коммунис Шăмăршă йалсовет председателĕ пулса виçĕ çул ытла ĕçлерĕ. Ĕçе тĕрĕс тата тăрăшса туса пынăшăн, йалти халăха ăвлантарса ĕçленĕшĕн—ăна Шăмăршăра хисеплеччĕç, йурататтчĕç. Çапла лайăх ĕçлесе пынине курса, кăçалхи апрел уйăхĕнче, ăна Шăмăршă районĕнчи потребсойуз председательне суйлареç. Халĕ вăл районра суту-илӳ ĕçне лайăхлатса йарасшăн тăрăшса ĕçлет.

Калашникăв йулташ ĕçлеме тытăниччен, 1935—1936—1937 çулсенче, Пашйелĕнчи йалпора растратчиксем ĕçленĕ, йалпо ĕçне йăлтах йухăнтарса лартнă. Халĕ Калашникăв йулташ çак йалпо ĕçне йĕркелет. Халăха куллен кирлĕ таварсем Пашйелĕнчи йалпора нумайлансах пыраççĕ. Ку вăл пуçламĕш çеç-ха. Шăмăршă райпотребсойузĕпе Пашйелĕнчи йалпора ĕçлекенсем малашне татах та лайăхрах, тимлĕрех ĕçлесе пырсан, халăха кирлĕ таварсем çителĕклĕ пулеç.

Шăмăршăри йалпора та растратăсемпе убыткăсем пулнă. 1937 çулта йалпо укçине 4000 тенкĕ салатса йанă, çавна пула суту-илӳ ĕçĕ начарлама пуçланă. Кăçал йалпо 7609 тенкĕ тупăш панă.

— Епĕр халĕ районри пур лавкасенче те тăтăшах ревизисем тăватпăр, продавецăн ĕçне тĕрĕслесе унан çитменлĕхĕсене çийĕнчех палăртатпăр. Кун пек туни вăл—ĕçре питĕ пулăшать, продавецăн растрата пулсан, ăна тарăна кĕме, пысăкланма памасть. Акă нумайах пулмасть-ха Асанкасси магазинĕнче Карпăв продавецăн ĕçне тĕрĕслерĕмĕр. Çак тĕрĕслӳре вăл 1400 тенкĕ укçана хăй валли илнине палăртрăмăр, укçине çинчех шыраса илтĕмĕр.

— Халĕ епĕр продавец пулма питĕ тĕплĕн тĕрĕслесе илетпĕр. Иртнĕ çулсенче час-часах пĕлнĕ-пĕлмен çынсенех магазинсене продавец пулса ĕçлеме илнĕ. Паллах ĕнтĕ, тĕрĕслемен, шанчăксăр çынсем районри суту-илĕве йапăхтарса çитернĕ.

— Иртнĕ çулсенче Канашран Шăмăршă тавар турттарса та питĕ пысăк расхут кăларнă. Кашни килограм таваршăн 25 пус тӳленĕ, халĕ килограм тавара машинăпа турттарса килме 11 пус кайать.

— Катăклă сахăр турттарнă чухне ванса песукланса кайнине кам пĕлмест. Вăт çак ваннă сахăра килограмне пĕр тенкĕ те 30 пус таран йӳнетсе сутнă. Çапла сутса районри магазинсем çуллех 23.000 тенкĕ убыткă тӳснĕ. Халĕ çак ваннă сахăрпа квас туса сутатпăр,—тет П. Калашникăв йулташ.

П. Калашникăв йулташ магазинсенче продавецсене большевикла воспитани парас тĕлĕшпе те ĕçлет. Вăл вĕсемпе тăтăшах калаçусем, канашлусем туса иртерет, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшать. Акă, Шăмăршăри магазинра ĕçлекен продавец Матвейев йулташ тăтăшах ĕçсе ӳсĕр çӳреме пуçланă. П. Калашникăв йулташ Матвейĕва ун пек ирсĕр ĕç тума йураманни çинчен каланă, вĕрентнĕ, йатланă. Халĕ Матвейев йулташ тӳрленнĕ, ĕçмест, лайăх ĕçлесе пырать.

П. Калашникăв йулташ пулăшнипех Шăмăршăри йалпо председателĕ Иван Николайĕвич Калашникăв парти кандидатне кĕме хатĕрленет.

Кĕскен çапла каламала: П. Калашникăв йулташ ӳссе çитĕнсе пыракан большевик. Вăл тăрăшса, лайăх ĕçлет. Малашне татах та хастарлăн ĕçлесе, Шăмăршă районĕнчи магазинсен ĕçне тĕпренех çĕнетсе йарасса, халăха кирлĕ таварсене çителĕклĕ таран кӳрсе килессе кĕтетпĕр.

М. Микулин.

Çеминар иртертĕмĕр

ЙĔЛЧĔК. Иртнĕ кунсенче парткабинетра агитатăрсен çеминарĕ пулса иртрĕ. Çеминара 31 агитатăр пухăннă. Райком çекретарĕ Прокопйев йулташ тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем çинчен тата вăл ыйтусемпе йалсенче мĕнле калаçусем туса иртермелли çинчен каласа пачĕ. Çеминар хыççăн, пур агитатăрсем те докладсем, калаçусем иртерме йалсене саланчĕç.

Парткабинетра партин II мĕш съезĕ 35 çул тултарнă йатпа партипе комсомол активне валли пысăк доклад пулать.

А. Романăв.

Вĕренӳ çулне хатĕр

Асхвари (Канаш р.) пуçламĕш шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитет. Шкул çĕнĕрен 2 шкаф, 3 сĕтел, 20 партă илнĕ. Çавăн пекех ачасем валли вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем—кĕнеке, тетрат т. ыт. илсе хатĕрленĕ.

И. Федăрăв.

пах та суту-илӳ организацисем çăкăр сутас ĕçре пысăк чăрмавсем туса пыраççĕ. Халăх пахă суртлă çăкăрсемпе булкăсем ыйтнине, уйрăмăнах йалта, çырлехтарса пыраймаççĕ. Çăкăр сутас плана тултараймании вĕрремĕш квартăлта пĕтĕм тавар çаврăнăш планне тултараймании тĕп сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăнă.

Çĕршывра тăвар, сахăр, кăраççин, кĕрпесем т. ыт. те çителĕклĕ. Апла пулсан та, çак таварсемпе суту-илӳ тăвас ĕçре чăрмавсем пулаççĕ-ха. Белоруççире, Краснодар крайĕнче тата Днепропетровск облаçĕнче нумайах пулмасть потребкооперации ĕçне тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, унти нумайĕш лавкасенче ийуль уйăхĕнче: тăвар, сахăр, тулă çăнăхĕ, çĕрулми çăнăхĕ, тинкĕле, сĕлĕ кĕрпи, перловăй кĕрпе пулманнине палăртнă; тата кăраççин, урапа масĕ, тикĕт, содă, йавăç савăт-сапасем, лампă кĕленчисем, стакансем, кружкăсем те пулман. Паллах, çакнашкал таварсемсĕр ларакан лавкасем çĕршывăн ытти облаçĕсемпе районĕсенче те пур, унтаи нимĕн иккĕленмели те çук. Çак йапала вăл вырăнти потребсойузсемпе торгсен бансенче вăл таварсем ытлашшипех пур вăхăтра пулнă.

Халь пахча-çимĕç çеçонĕ. Кăçал питĕ нумай пахча-çимĕçсем пулса пеме. Халăх валли пахча-çимĕç тăратасси пысăк ĕç иккĕмĕ пуринчен те паллă. Анчах çак ĕç халĕ питĕ йапăх пулса пырать-ха, пахча-çимĕçсем нумай пасăлса пĕтеççĕ, Пахча-çимĕçсене усрамалли вырăнсене, складсене, ледниксене, хатĕрлеме йуктине те йĕркелесе çитерме... пахча-çимĕçсем питĕ нумай пулин те, халăх ыйтăвĕ çырлахăймасăр йулать. Суту-илӳ тăвакан организацисен, хулари тата йалти советсен пĕрремĕш обязаннăçĕ вăл—пахча-çимĕç хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе, суту-илӳ системине лайăх хатĕрлесе çитерсе, халăх валли пахча-çимĕçсем çителĕклĕ тăратма кирлĕ ĕçсене пурне те тăвасси.

Суту илĕвĕн кашни предприйатийĕн—торгăн, потребсойузăн—чи кирлĕ задачи, вырăнти ресурсcене тупасси, вырăнта (хуларă, йалта) таварсем туса кăлармалли пысăк майсемпе усă курасси пулса тăрать. Чылай таварсемпе суту-илӳ тăвасси чăрмавлă пулса пыни суту-илӳ организацисем хутса тавар туса кăлармалли майсемпе вырăнсенче усă курманнинчен те килет.

Вырăнсенчи таварсен ресурсне хакламаннине тахçанах пĕтермеле. Кашни райпотребсойузăн, вырăнти кашни торгăн нумай таварсене вырăнта тумалли пысăк майсем пур. Пысăк пуçарулăх çеç кирлĕ, вырăнти промышленноçпа, власта промысла кооперацийĕпе, промколхозсемпе тачăн çыхăнни кирлĕ Алăсти промысла ертелĕсемпе промколхозсенчен нумайĕшĕ халь çителĕксĕр нагрузкăпа ĕçлеме ĕçĕ, вĕсем хаь туса кăларнинчен нумай ытларах тавар туса кăларма пултараççĕ. Вырăнти парти совет организацийĕсем районри промышленноçпа тата власта промысла кооперацийĕпе тачăн çыхăнса ĕçлеме тивĕçлĕ.

Магазинсемпе лавкасене ăçта усă ĕçре пулнă пысăк çитменлĕхсене те хăвăрт пĕтермеле. Вырăнсем суту-илӳ тумалли вырăнсене окраинăсенче тата инçетри районсенче ытларах сарма пур ĕçсене те тумала, кирлĕ таранах магазинсем, павилйонсем тата ларйоксем тумала. Суту илĕвĕн материаллă техникăлă базине (складсем, базасем, универмагсем, пахча-çимĕçсене усрамалли т. ыт. те) тăвассине уйрăмăлах вăйлатмала.

1938 çулта магазинсемпе лавкасем тата склад хуçалăхĕ тумалли капитальнăй строительстăва валли правительстăва 340 мĕлйун тенкĕ уйăрнă. Ку вăл 1937 çулта капитальнăй строительствă валли тунă тăкакран пĕрре çурă хут ытларах. Кăçал капитальнăй строительствă валли уйарнă суммăн пысăкрах пайĕпе инçетри районсенче (Владивосток, Чита, Хабаровск тата Инçет-Хĕвелтухăçĕн ытти районĕсенче), суту-илӳ тăвакан вырăнсем сахалтарах пулни уйрăмăнах çивĕччĕн палăракан районсенче, пысăк тухăçлă тырпул тăвакан, тавар продукци нумай паракан районсенче усă курмала (Дон, Кубань, Атăл тăрăхĕ т. ыт. те).

Кашни хулара пекех тата общественлă апатлану йĕркине те пысăк ĕçсем тумала. Халăх тăшманĕсем 1935—1936 çулсенче тата 1937 çул пуçламăшĕнче пурĕ 2 пине йахăн столовăй хупса лартнă. Общественлă апатлану ĕçне уйрăмăнах йалсенче начар организациленĕ. Халăх тăшманĕсем хупса пĕтернĕ столовăйсене васкавах ĕçлеттерме пуçласси, общественлă апатлану предприйатийĕсене хулара та, йалта та нумайлатасси, столовăйсен тата ресторансен, кафесен тата чайнăйсен ĕçĕсене лайăхлатасси — вырăнти — суту-илӳ те халех тумалли задачăсенчен пĕри пулса тăрать.

Районсенче, облаçсенче тата крайсенче пулса иртнĕ партконференцисем, çавăн пекех тата нацкомпартисен республикăсенчи съезĕсем—совет суту-илӳвĕн ыйтăвĕсем çине, суту-илӳ органĕсенче пулнă сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерессипе çине, суту-илӳ аппаратне хăшпĕр çĕрте пытанса йулнă тăшмансен хӳрешкесенчен, политикă тĕлĕшĕнчен шанчăксăр елементсенчен тасатас тата суту-илӳ органĕсене çĕнĕ, ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсене, Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн паранă çынсене лартас задачă çине уйрăмăнах çавăрса пăхреç. Чылай парторганизацисем (Мускаври, Ленинградри) суту-илӳ органĕсене ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме конкретлă пулăшса пыраççĕ, вĕсене суту-илӳ предприйатийĕсенче куçран кунах йĕрке туса пыма пулăшаççĕ.

Анчах та нумайĕш облаçсенчи тата крайсенчи парти комитечĕсем суту-илӳ ĕçне кирлĕ пек пулăшса пымаççĕ, суту-илӳ аппаратне тĕрĕслеме кадрсемпе, лайăх коммунистсемпе çирĕплетес ĕçе питĕ вăрахăн тата йапăх туса пыраççĕ. Тавар çаврăнăшне вĕрмайах сарса пыраcси, суту-илӳ ĕçĕнче пулнă пысăк çитменлĕхсене пĕтересси, суту-илӳ аппаратĕн пур çурăкĕсенчен те тăшмансен хӳрешкесене хăвалаcа кăларасси—парти совет организацисем пурте давлех тумалли ĕç, мĕншĕн тесен вĕсем ĕççыннисем валли çителĕклĕ тавар тăратасcишĕн, вĕсен хушшинче культурăлă суту-илӳ тунишĕн суту-илӳ органĕсемпе пĕр танах ответ тытаççĕ.

Çулсене йусаса çитермен

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Халĕ районра пур колхозсенче те хĕрсе тырă выраççĕ. Тырă вырма малтан тухнă „Сталь", „Çĕнĕ пурнăç", „Свет" т. ыт. колхозсем уйри кĕлтесем пуçтарма тытăнчĕç. Хăшпĕр колхозсем государствăна тырă параççĕ.

Паллах, çакăн пек хĕрӳ ĕçре çулсем, кĕпересем лайăх пулмалла. Анчах кунта çĕнĕрен тума йе йусама тытăннă çулсене туса пĕтермен вырăнсем сахал мар ха. Çĕнĕ Атайран Хĕрлĕ Чутайа каймалли шоççе çулĕ çине шашкăсем сарма „çуркуннех тытăнчĕ. Ку çула пайанхи куна та туса çитерейĕн. Çулйĕр техникĕ Йефимăв: „йăвăç çук, колхозсем ĕç пайĕ памаççĕ", тет. Çулсем çине сарма кӳрсе килнĕ хăйăра сармаççĕ, хăйăр куписем çеремленсе ларнă. Çавăнпа ку çулсемпе тулли лавпа мар, пушăла та иртсе çӳреме кайсăр.

Мих. Иванов.

Кĕперсем йапăх

ВĂРНАР. Чăлăм Кăкшăмри Станин начĕпе тăракан колхозăн Нурăспа Канаш хушшинчи çул çинче 3 километр тăршшĕ çула тасатса, пакатса тăмала. Анчах колхоз пăйанхи кунччен ку йенĕпе ĕçе тытăнман-ха. Çул хĕрĕнчи канавсем çеремленсе ларнă. Çак участкăрах пĕтĕмпе 10 кĕпер шутланать. Вĕсенчен пĕр кĕперĕ те йусавлă мар. Кĕпер хăмисем хуçăлса, шăтса пĕтнĕ. Машинăсемпе йе тулли лавпа çӳреме те хăрушă. Мăн Çĕнвал урлă каçакан кĕпер тепĕр икĕ эрнерен йурăксăра тухать. Машинăсем аран каçаççĕ. Ку участкăра çул десятникĕ Тимофей Зайцев кĕпер тума тесе пайă вăйăççсене салатса пĕтерчĕ. Йалсоветпа районри çулйĕр пайĕ ĕç çавнашкал пулни çине килĕшулĕн пăхса тăраççĕ пулас.

Ив. Ковлов.

Вĕренӳ çулĕ тĕлне çĕнĕ шкул

ШĂМĂРШĂ. Çĕнĕ Шăмăршă йалĕнче валличчен шкул çуртĕ пулман. Кăçал кунта йатерласа 70 ача вĕренмелĕх çĕнĕ шкул çуртĕ туса лартреç. Çитес вĕренӳ çулĕнче йалти пуçламĕш шкула çӳрекен ачасем пысăк та сутă шкул çуртĕнче ... Йалсовечĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме чылай ĕçсем турĕ. Çĕнĕ Шăмăршăпа Кивĕ Шăмăршă шкулĕсем валли 100 кубик метр вутă турттарса хатĕрленĕ. Шкулсенче 16 партă йусанă, 7 партă, 2 доска ... т. ыт. те.

Германире йалхуçалăхĕнче ĕçлеме вăйпа илĕкçĕрлесе йарaççĕ

Германире йалхуçалăхĕнчи рабочисене тÿсме çук хытă эксплоатацилесе пирки, рабочисем кулаксемпе помещиксен хуçалăхĕнчен пăрăнса тарaççĕ. Ĕç условийĕсем çав тери йăвăр, çавăнпа ĕçсĕр тăрса йулнă рабочисем те йалхуçалăхне ĕçлеме кайма килĕшмеççĕ. Кулаксемпе помещиксен хуçалăхĕсенче тырпула пуçтарса кĕртмĕ çĕрте пуринчен ытла пурне те тивĕç ĕç повинноçĕ çинчен каларнă саккун тăрăх мобилизацилесе çынсем тата салтаксем ĕçлеççĕ.

(ТАСС).

Константин Çергейĕвич Станиславский вилнĕ

Августăн 7-мĕшĕнче Мускавра сцена çинчи генилĕ художник, Мускаври Художествăллă Академи Театрне пуçласа йаракан, Совет искусствин аслă маçтăрĕ, ССРС халăх артисĕ, икĕ хутчен орден илнĕ 75 çулхи Константин Çергейĕвич Станиславский вилнĕ.

Кăçал йанвар уйăхĕнче пĕтĕм çĕршыв вырăс искусствин аслă маçтăрне 75 çула çитнин йубилейне уйавласа ирттернĕччĕ. Ун хыççăн К. Ç. Станиславский çĕнĕ постановкăсем лартас пирки нумай ĕçлерĕ, анчах чĕре чирĕ вăйланса пынă пирки ийунĕн 15-мĕшĕнче пуçласа унăн ĕçе чарăнса ларчĕ.

Августăн 2-мĕшĕнче К. Ç. Станиславский хăйĕн сывлăхĕ йăвăрланнине сисрĕ. Ун вăй хăвачĕ пырша чирĕ пуçланнипе татах та начарланчĕ. Августăн 7-мĕшĕнче 3 сехет те 45 минутра К. Ç. Станиславский, тăнне çухатмасăр вилсе кайрĕ.

(ТАСС).

Нацилĕ республикăсен спартакиадине тивĕçлипе хатĕрленмеле

Пĕтĕм Сойузри физкулътурăпа спорт комитечĕ йышăннă тăрăх, августăн 30-мĕшĕнче, Шупашкарта 7 нацилĕ республикăсенчи физкулътурниксен спартакиади пуçланаť. Спартакиадăна республикăсенчи лайăх, пултарулă спортсменсем пухăнаççĕ.

Пирĕн республикĕре те ĕнтĕ физкулътурăпа спорт ĕçĕнче пысăк ÿсĕмсем туна. Çапах халиччен тунă ÿсĕмсемпе лăпланма йурамасť. Иртнĕ çулсенче пулса иртнĕ спартакиадăсенче пирĕн физкулътурниксем кайри вырăнсене йышăнса пынă. Ку ĕнтĕ физкулътурă ĕçĕ кирлĕ вырăнта тăманнине пĕлтерет. Нацилĕ республикăсен спартакиадине хатĕрленнĕ май физкулътурăпа спорт ĕçне тĕпренех вăйлатса йамала. Пирĕн республĕкри физкулътурниксен çак спартакиадăра малти вырăншăн кĕрешмеле.

Спартакиадă иртерме лайăх йĕркеленĕ шыв станцийĕ тата стадион кирлĕ. Шупашкарти „Спартак" общĕствин стадионне хатĕрлесе çитереççĕ, анчах „Темп" общĕствин стадионĕ спортсменсене кĕтсе илме питех те йапăх хатĕрленет. Кунта чупмали, çăмăл атлетикă валъли вырăнсем хатĕр мар. Курма пыракансем валъли лармали саксемпе трибунăсем çителĕклĕ мар тата ыт. те.

Республĕкри пур физкулътурă общĕствисен те спартакиадăна тивĕçлипе хатĕрленсе тухмала. Тăтăшах тренировкăсем иртерсе, спортсменсене спартакиадăна тивĕçлипе хатĕрлемеле. Паллах ĕнтĕ, пур йенчен те хатĕрленсе çитнĕ, пултарулă физкулътурниксем çеç спартакиадăна хутшăнма пултараççĕ. Анчах та хăшпĕр районсенчине хуласенчи физкулътурă руководителĕсем çакна ăнланса илмен-ха. 7 нацилĕ республикă спартакиадине хатĕрленнĕ май нумай та пулмасť Сăр шывĕ тăрăхĕнчи районсен спартакиади пулса иртрĕ. Кунта çăмăл атлъотикă, кимĕпе ишес, пăшал перес тата футбол вăййи йенĕпе Улатăр, Çĕмĕрле тата Йетĕрне районĕсенчен хутшăнчĕç. Спартакиадăна пурĕ 90 спортсмен хутшăннă. Вĕсенчен чылайăшĕ республикăри спартакиадăна тата 7 нацилĕ республикă спартакиадине лайăх хатĕрленсе пыни курăнчĕ. Çак ăмăртура Чăваш республикешĕн çĕнĕрен 5 рекорд тунă.

Çавăн пекех çак кунсенче Шупашкарта хулари малти вырăншăн çăмăл атлъотикă ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ку ăмăртура Сăр шывĕ тăрăхĕнчи районсен спартакиадиче пулнă рекордсенчен те маларах иртни палăрчĕ.

Чылай районсенче спартакиадăна начар хатĕрленеççĕ. Канаш, Çĕрпÿ, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле тата ытти хăшпĕр районсенче те районсенчи çăмăл атлъотикă ăмăртăвĕсене иртермен. Çав районсенче спортпа вĕренÿ ĕçĕ кирлĕ пек пулса пымаççĕ. Çавăн пекех республикăри „Учитель", „Буревестник", „Темп" общĕствисен совечĕсем те 7 нацилĕ республикă спартакиадине тивĕçлипе хатĕрленме тытăнман. Вăл общĕствăсенче футбол вăййине ыталарах хакласа, чи паллă спорт ĕçĕсене (çăмăл атлъотикă, шывра ишесси, кимĕпе ишесси, пăшал перес ĕç) пĕтĕмпех манса кайнă.

Республикăри ирĕклĕ спорт общĕствисен совечĕсемпе райĕçтăвкомсен физкулътурă инструктăрĕсем халăх массине физкулътурă ĕçне хутшăнтарас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Вырăнсенчи физкулътурă коллективĕсенче политикăллă воспитани тата массăллă физкулътурă ĕçĕсем начар пулса пыраççĕ.

Нацилĕ республикăсен спартакиадине хатĕрленнĕ май „ГТО" тата „БГТО" значокĕсен нормисене парас ĕçе тĕпренех вăйлатмала. Анчах, 1938 çулхи августăн 1-мĕшне илсен, значоксен нормисене парас плана 53,4 процент çеç тултарнă.

7 нацилĕ республикă спартакиадине хатĕрленнĕ май оборонăна физкулътура ĕçĕсене тĕпренех лайăхлатмала. Спартакиадăна лайăх хатĕрленсе кĕтсе илесси республикăри ирĕклĕ физкулътурă общĕствисен совечĕсен тата республикăри физкулътурăпа спорт ĕç комитечĕн хисеплĕ ĕçĕ пулса тăраť.

Хаçатсенчен

Тÿрĕлĕх

Сойузднотрестăн Азăври конторĕнче ĕçсем пĕтнĕ хыççăн сотрудниксем килĕсене саланса пĕтсен, сторăж Климков йулташ йăлтанхи пекех контора суртне тĕрĕслеме пуçланă.

Çакăн пек тĕрĕсленĕ чухне вăл конторăри кассине питĕрсе хăварманнине курнă, кассăра укçасем тата документсем нумай пулнă.

Климков çавăнтах кассăна сыхлама пуçласа кассира тата бухгалтĕра контора пыма чĕннĕ. Çакăн пек тÿрĕлĕхе пула кассăран нимĕн те çухалман.

(„Водный транспорт").

25.000 тенкĕ выляса илнĕ

Ленинград хулинчи Куйбышĕв районĕнчи тĕп перекет кассине И. хушаматлă пĕр çын пырса, хăйĕн 1930 çулхи зайом облигацисене 1938 çулхи зайом облигацисемпе улăштарма ыйтнă. Облигацисене тĕрĕслесе тухсан, облигацисенчен пĕри 25.000 тенкĕ выляса илни палăрнă.

Вăл облигаци 1937 çултах выляса илнĕ пулнă иккен. Хăйĕн облигацисене тĕрĕслемесĕр выртарнă çав çын çакăн çинчен халĕ кăна пĕлнĕ. Перекет касси ăна выляса илнĕ 25.000 тенкĕне парса йанă.

(„Известия").

Лайăх пособи

„Крокодил" журнал хăйĕн иртнĕ уйăхсенчи пĕр номĕрĕнче суту-илÿ ĕçĕнче ĕçлекен икĕ çынăн каласуне пичетлесе кăларнă. Пĕри, хăй культурăллă суту-илÿ тума пĕлменрен, çапла ыйтаť:

— Мĕнле есĕ культурăллă суту-илÿ тума вĕрентĕн? Мĕнле кĕнеке тăрăх?

Ăна вара тепри çапла ответ параť:

— Пуринчен ытла, жалăбă кĕнекипе!..

Кÿкеçри столовăйĕ пуçлăхĕ Борис Артемйĕв та, вăл жалăбă кĕнекипе интересленекен çын пулсан, столовăйне культурăлăх кĕртмеле тата паха, тутлă апат-çимĕç пĕçермеле пĕк туйăнаť. Жалăбă кĕнекийĕ хулăм та чăн-чăн вĕренÿ пособийĕ пекех. Вăл кĕнеке çине паха сĕнÿсем çырнă.

— Пирĕн çĕршывра пахча-çимĕç нумай. Вăл çимĕçсемпе темиçе тĕслĕ, темĕнле апат та пĕçерме пулаť. Есĕр пур, вăл çимĕçсенчен винигрет та пĕçерместĕр, вăл çимĕçсене тупса илейместĕр.

— Катлета тутăсăр пĕçереттĕр: тепĕр чухне тăварсăр, çăтса анмасť, хăш чухне ытла тăварлă... Епĕ ку жалăбăна хирĕç ответ кĕтместĕп, унăн ответне апата лайăх пĕçеринче курма пултарăп...

— Кашни ир пĕр апат: чей тата кофе, мĕншĕн йашка тата ыттисене пĕçерместе́р?..

Тепĕри тата жалăбă кĕнекине пăхса тухнă та çапла çырса хунă:

— Мĕншĕн пĕр жалăбăна та ответ памастăр. Вĕсем сĕрĕнтен апат пахалăхне лайăхлатма ыйтаççĕ...

Чăнах та, чылай жалăбисене ответ памасăр хăварнă. Хăшпĕр ответĕсем тата йачĕшĕн кăна, жалăбшчиксенчен каçару ыйтнă йеверлĕ. Столовăйĕнче йĕркелĕх сахал. Официанкăсем таса мар халатсем тăхăннă.

Столовăй пуçлăхĕн, Борис Артемйĕв йулташăн, чăнласах çак кĕнеке тăрăх ĕçлесе пымалла пулаť, вара вăл столовăйĕнче тутлă апат-çимĕç пĕçерме тата таса-лăх тытма пултарĕ.

ИВ. МОÇЕЙЕВ.

Китайри троцкиссен ишĕлтерÿллĕ ĕçĕсем

Цзйанси тата Гуандун провинцисенче (Кăнтăр Китай) Йапони разведки панă задани тăрăх, Китайри троцкиссем хăйсен отрйачĕсене туса хунă, вăл отрйадсем—хĕрлĕ çар отрйачĕсем тесе улталаса çÿреме пуçланă. Вăл отрйадсем халаха саратаççĕ, халăхпа Китайăн вырăнсенчи çарĕсем хушшинче провокацилĕ тытăçусем организацилеççĕ, çăпла майпа вĕсем коммунисла парти авторитетне пĕтерессшĕн тата вăл Китай правительствин партийĕпе — Гоминданпа пĕр пулса килĕшÿллĕ ĕçленине çĕмĕрессшĕн тăрăшаççĕ. Троцкисла бандитсен пĕр пайне арĕслесе кирлĕ пек наказани панă. Компартин вырăнти комитечĕ йатарласах халăха чĕнсе каланине пичетлесе, троцкиссен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнă. Китай пичечĕ класçене тата халăха кĕрешĕве чĕнет, пĕтĕм троцкисла бандитсене—Йапони разведкин ирсĕр агенчĕсене—тĕппи-йĕрĕпех пĕтерме чĕнет.

(ТАСС).

Кино кăтарттас ĕç

КАНАШ. Çак иртнĕ кунсенче Чăваш республикĕнче кино кăтартас йенĕпе ĕçлекенсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлăва районсенчен кино уйрăмĕсен уполномоченнăйĕсем тата культурă çурчĕсен пуçлăхĕсем мĕн пурĕ 38 çын пуçтарăнчĕç. Вĕсен хăйсен ĕçĕсем çинчен тата Кинотрест хăйсене мĕнле пулăшса пыни çинчен тухса-тухса каларĕç. Тухса калансем нумайĕшĕ Чăваш Кинотрест çителĕксĕр ĕçленине, районсенчи киноуполномоченнăйĕсене сахал пулăшса пынине палăртрĕç.

1938 çула кĕнĕрен кинотрест кино работникĕсене пĕрре те пуçтарса каламан. Çавăн пекех тата киномеханиксем хушшинче харпăрхăй тĕллĕн вĕренес ĕçе халиччен те йĕркелемен. Районсенче план тăрăх кăтартмала пулнă картинăсене „ĕç вăхăчĕ" тесе 308 картинă кăтартмасăр хăварнă. Ку ĕнтĕ, паллах, кинотрест районсенчи киноработниксемпе таччăн çыхăнса ĕçлеменнинчен килнĕ. Канашлу кино кăтартас ĕçри çакнашкал çитменлĕхсене тĕппипех пĕтересси çинчен татăклă решени йышăнчĕ.

Пирĕн республикăра сасслă кинотеатрсем пурĕ 10, вĕсенчен 7 хулара, 3 йалсенче. Вырăна тухса çÿрекен киносем—78. Тухса çÿрекен сасслă киносем 1936 çулта республикăра пурĕ те иккĕ кăна пулнă, кăçал 27 çитвĕ, 1939 çулта—50 пулмала.

Чăваш халăхĕн культури ÿссе пынă май кино кăтартас ĕç те çулран çулах хăйланса пыраť.

Йа. Степанăв.

Йут çĕршыв хроники

● Лондăнра империализăма хирĕçле конференци пулса иртнĕ, ăна империализăма хирĕç кĕрешес ĕç лиги организациленĕ. Конференцине 254 организацирен 587 делегат пулнă, вăл шутран: лейборисла партин 30 организацинчен, 38 профсойуз организацинчен, 30 кооперативлă организацирен тата Англири компартин 35 организацинчен, çавăн пекех çамраксен организацинчен —çамрăксен лейборисла лигинчен тата комсомолран делегатсем пулнă.

● Майоркă утравĕ патĕнче тăракан „Кварто" йатлă крейсĕр (Итали крейсĕрĕ) çинче пит вăйлăн сиксе сирпĕннĕ. 15 çын вилнĕ, 20 çын йăвăр аманнă.

● Англи правительстви хăйĕн Бургосри дипломатилĕ агентне кăтарту панă, вăл кăтартупа Франко генерала, „Невмешательствă" комитечĕ „доброволецсене" Испанирен чĕнсе илес тĕлĕшпе панă сĕнÿ пирки сирĕн ответа Англи правительстви шанах кĕтет, тесе аса илтерме каланă. Франко генерала куппа иккĕмĕш хут ас-тутарнă ĕнтĕ.

●● Центрти Китайра Китай телеграфĕ августăн 1-мĕшĕнче пĕтĕмпех йапонĕсен аллине куçнă.

●● Ийуль уйăхĕнче Муссолинин Римри тата Гитлерăн Берлинри ĕç кабинечĕсем хушшинче тÿрех телефонпа калаçмали сооружени тума пуçланă.

●● Парижре строительствăри рабочисен нумай çынлă митингĕсем пулса иртеççĕ, вăл рабочисем ĕç укçине ÿстерме тата коллективлă договăрсене çĕнĕрен пуçласа йама ыйтаççĕ. Таварсене ытлашши хаклантарса йанине хирĕç Парижре çывăх кунсенчех демонстраци пулса иртмеле.

(ТАСС).

Колхоз пулăшăвĕ

ВАРНАР. Пуканкăри Калинин йачĕпе тăракан колхоз çумĕнчи пĕр-пĕрне пулăшакан кассă ача çуратнă колхозницăсене, ĕç вăхăтĕнче сарăмсăр суранланнă колхозниксене пысăк пулăшу парса тăраť. Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ тăрăх, йăварлайнă хĕрарăмсене ача çуратас умĕн пĕр уйăх, ача çуратсан тепĕр уйăх хушши отпуск памала. Çак икĕ уйăх хушшинче вĕсене колхоз ĕçкунĕсем параť. Кунсăр пуçне пĕр-пĕрне пулăшакан кассă ача çуратнă хĕрарăмсене кашнийех 45-шер тенкĕ укçа парса пулăшаť. Çĕвĕ çултанпа 7 колхозницăна 315 тенкĕ укçа парса пулăшнă. Кусемсĕр пуçне колхоз кладовщикне, çурчĕ çунса кайнă пирки, кассă çĕнĕ сурт лартса панă.

Иккĕмĕш çеместра куçрĕç

1938 çулхи вĕренÿ çулĕнче Шăхасан, Çĕмĕрле, Вăрмар, Йĕпрес, Хĕрлĕ Чутай тата Ишлей районĕсенчи совет активисĕсем совет активĕн харпăрхăй тĕллĕн вĕренмели курсĕнче вĕренчĕç. Ул ă районсенчи пурĕ 115 заочник вĕреннĕ. Вĕсен хисепĕнче йалсовет председателĕсем, çекретарĕсем тата райĕçтăвкомсенче ĕçлекен работниксем пур.

Шупашкар хулинче ийулĕн 10—17-мĕшĕсенче пĕрремĕш çеместрта вĕренекенсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференцире чылай заочниксем пĕрремĕш çеместртан иккĕмĕш çеместра отличнă паллапа куçрĕç.

Совет активĕн харпăхăй тĕллĕн вĕренмелли курсĕнче вĕрени—йалсовет работникĕсен пĕлĕвне нумай ÿстерет. Акă, Шăхасан районĕнчи заочник А. Иванов йулташ хăй вĕренни çинчен çапла калаť:

—Епĕ йалсовет председателĕнче иртнĕ çулхи декабĕр уйăхĕнченпе ĕçлетеп. Ача чухне шкулта икĕ çул анчах вĕреннĕ. Малтанах йалсовет председателĕнче ĕçлеме питĕ йăварччĕ. Йанвар уйăхĕнче епĕ совет активĕн харпăрхăй тĕллĕн вĕренмели курсне кĕтем. Кашни уйăхра пĕрре район центрне виçĕ кунлăха консультацине çÿререм. Ун чухне мĕн пĕлменнисене консультантсем лайăх ăнлантарса паратчĕç. Заочнă вĕреннине кулленхи практикăлла ĕçпе çыхăнтарса, епĕ хаман Уйкас Кипек йалсоветне районри пĕрремĕш вырăна кăлартăм. Халĕ епĕ производствăран татăлмасăрах хамăн пĕлĕве ÿстеретĕп. Епĕ иккĕмĕш çеместртан та отличнă паллапа вĕренсе тухма пулатăп.

Петров.

„Халĕ ĕç вăхăчĕ"

Шăхасан районĕнчи Малти Ăнтавăш йалсоветне кĕрекен йалсенче хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 86 çын шутланаççĕ.

Хĕллехи вăхăтра кунта вĕсене хут вĕрентесси çинчен калаçнипех иртерсе йачĕç. Ĕçе пуçлани кунна çитсе те тытăнман-ха. Йалсовет председателĕ Андрейĕв:—Халĕ ĕç вăхăчĕ, çитес хĕлле вĕрентĕпĕр-ха,—тенипе лăпланса лараť.

Хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене вĕрентес ĕçе пĕрре те вăрахха йамала мар. Йалти культурăллă вăйа—учительсене, комсомолецсене тата çулахи вăхăта килме килнĕ студентсене йалăçтарса, ку ĕçе кулленех туса пымала.

КĔСКЕН

** Çĕнĕ клуб. Карай йалсоветĕнчи „Хĕрлĕ çăлтăр" колхоз (Трак районĕ) 200 çын вырнаçмалăх çĕнĕ клуб туса лартрĕ. И. Титов.

** Автомашинă туйанчĕç. Ишлей районĕнчи „Тивĕш", „Смычка", „ПСÇЛКС 9-мĕш çийĕ" колхозсем автомашинă туйанчĕç.

П. Владимирăв.

** Радио уйăра. Васкасси йалсовечĕ (Елĕк районĕ) уйри тырпула пухса кĕнĕ вăхăтра куçса çÿрекен радиоприйомник йĕркелесе уйăра колхозниксем ĕçлевĕ çĕре илсе тухрĕ.

И. Маркăв.

Вывĕскăсем çинчен

Район центăрĕнчи тĕрлĕ организацисене кулленех çĕршер çын ĕçпе пыраççĕ. Вĕсем учреждение кĕрсе хăвăртрах ыйтăва татса кайма тăрăшаççĕ. Анчах Елĕке килнĕ çынсем хăйсене кирлĕ организацине часах шыраса тупаймаççĕ. Парти райкомĕн суртне тупĕç-ха. унăн вывĕска пур. Анчах райĕçтăвкомпа унăн пайĕсем, прокуратурăпа халăх сучĕн çурчĕсем хăш тĕлтине тупма çук. Вĕсен вывĕскăсем çук.

Калăпăр, пĕр колхозник райĕçтăвком председателĕ патне ыйтупа килнĕ. Вăл райĕçтăвком суртĕнчи пÿлĕмсем тăрăх çÿреме тытăнаť, райĕçтăвком председателĕ хăш пÿлĕмре ĕçленине шыраť. Часах шыраса тупайман. Райĕçтăвкомра хăш пÿлĕмре хăш пай ĕçленине кăтартакан вывĕскăсем çук.

Колхозник çурчĕ. Ку сурта районти чылай организацисем вырнаçнă. Кунта та вывĕскăсем çук.

Елĕк районĕнчи учреждениссене килнĕ çынсем урамсем тăрăх хăйсене кирлĕ организацисене шыраса çÿреççĕ. Çынсем калана тăрăх çеç кирлĕ организацине шыраса тупаççĕ.

В. ЙЕФРЕМАВ.

Çĕнĕ лавка

Тивĕш йалповĕн (Ишлей р.) Тивĕшри уйрăмĕ таварçавăрăвăш планне вăхăтра пурнăçласа пыраť. Йалпо уйрамĕ лайăх ĕçлесе пынипе кăçал кивĕ лавка вырăнне хĕç тимĕр витсе çĕнĕ лавка лартрĕ. Йулашки вăхăтра йалпо пур йенчен те лайăх ĕçлеме тытăнчĕ 1938 çулта çăмарта пухмă планне обйазательствăна 93,5 процент пурнăçларĕ. Таварсене вăхăтра кÿрсе килме йалпо çĕнĕ автомашина туйанчĕ.

Л. Петров.
О. Артемйĕв.

Кармăшри пасарта

Карăшра (Куславкка р.) кашни ернере ик хут пасар пулаť. Кунта колхозниксем йалхуçалăх продукцисем нумай илсе тухса сутаççĕ. Анчах пасарта сĕт-çу, чăкăт, çăмарта, сăра квас сутакансем валъли уйрăм вырăнсем туса паман. Тавар сутма тухнă çынсем çĕре ларсах сутаççĕ. Тата тасалăх инспекторĕсем те пасарти тасалăха тĕрĕслемеççĕ.

Малашне Кармăш пасарне йĕрке кÿмелех.

Ив. Ф.

Переписçе хатĕрленеççĕ

КАНАШ. Районра 1939 çулта пулакан халăх переписне хатĕрленме тытăннă. Халĕ районри пур йалсоветсенче те хуçалăх кĕнекисене тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕслÿре 21 йалсоветран 10 йалсоветĕнче 1941 çынна хуçалăх кĕнекисем çине кÿртменнине палăртрĕç. Çавăнпа хуçалăх кĕнекисене иккĕмĕш хут тĕрĕслеме пуçларĕç.

Перепис вăхăтĕнче районра 4 участкă пулаť. Çав участкăсенче ĕçлеме 192 счетчик уйăрса хунă. Вĕсенчен 130 çын иртнĕ суйлавсенче суйлав комиççин председателĕсем, çекретарĕсем, членсем тата агитаторсемпе доверенăйсем пулса ĕçленĕ.

Çак кунсенчех районра счетчиксен курсĕ уçăлаť.

А. Кириллăв.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен курсĕ

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем республикăра питĕ кирлĕ. Çав майпа та Сутĕç Халăх Комиссариачĕ кăçал Шупашкарта кĕске вăхăтлăх курс уçнă. унта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем 23 çын вĕренеççĕ.

Совет Сойузĕ тăрăх

●● Калининри пиравăр хапрăкĕсем пĕрремĕш çурçулта 105.916.600 метр, пĕлтĕрхи пĕрремĕш çурçултипе танлаштарсан 14 мĕлйун метр ытларах пиравăр тĕртсе кăларнă. Пиравăр тĕртекенсем çулталăк вĕçĕ тĕлне планран иртерсе икĕ мĕлйун метр пиравăр тĕртсе кăларма сăмах панă.

●● Башкиринчи колхозсем тырпул вырса пулнă вăхăтрах кĕртырри культурисене акма тытăннă. Йерминкейевск районĕнчи „Туран" колхоз республикăра пуринчен те малтан 60 гектар ыраш акнă.

●● Кийĕвра пăрахутсем тăвакан „Ленинская кузница" савăтăн верфĕнче пысăк вăйлă, лайăх илемлетнĕ, икĕ палубăллă пăрахут-экспресс „20 лет Октября" туса çитерĕ. Вăл Кийĕвпа Херсон хушшинче çÿремелле пулаť.

●● Мускавра „Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн XX çулĕ" йатлă художествăллă выставкă уçăлнăранпа августăн 6-мĕшĕнче виçĕ уйăх тулнă. Выставкă 145 пин çын пырса курнă.

●● Сойузри консервăсем тăвакан савăтсем ийуль уйăхĕнче кăçалхи пахча çимĕçĕсемпе улма çырла таврашĕсенчен 40 мĕлйун банк ытла консервă туса кăларнă. Ку вăл пĕлтĕрхи ийуль уйăхĕнче туса кăларнинчен 10 мĕлйун банк ытларах.

(ТАСС).

Пушарпа кĕрешекен дружинă

СĔНТĔРВĂРРИ. Кивĕ Тутайкассинчи „Кувер" колхоз çумĕнчи пушарпа кĕрешекен дружинă—районра чи лайăх ĕçлекен дружинă. Ку дружинăна 1935 çултанпа колхозник Федăр Çемйонăв начальник пулса йертсе пыраť. Дружинă лайăх ĕçленине шута илсе, Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн районри уйрăмĕ ăна 1937 çулта хисеплĕ грамота парса премилерĕ.

Дружинăн пушарпа кĕрешмели хатĕрсем çителĕклĕ: 1 насус, шыв турттармали пичкесем лаштипе урапасем 4, витресем, вагорсем т. ыт. те пур. Вĕсем пурте йусавлă та хатĕр тăраççĕ.

Дружинăра 23 çын, вĕсем пурте активлă ĕçлеççĕ, 4 çын вышкă çинче кунĕн çĕрĕн сменăпа улшăнса хурал тăраççĕ. Кунсăр пуçне йалта, колхоз уйхирĕнче, тырпулсем патĕнче, лаша вити, сысна ферми, складсем, çил арманĕ патĕнче хуралсем пур. Çемйонăв вĕсене тĕрĕслесех тăраť.

Колхозăн çурчĕсем патне пур çĕре те пичкесемпе шыв лартнă. Çаваншкалах кашни колхозник килĕ умĕнчех пичкесемпе шыв пур. Колхозăн лаша вити патĕнче çич вăйĕпе ĕçлекен двигатĕлпе шыв кăларакан çăл тунă. Вăл çăл патне 5000 витре кĕрекен пысăк чан туса лартнă. Йал хушшинче вут кăвартан сыхланас тĕлĕшпе кашни çулах 4 пĕве пĕвелеснĕ, кăçал каллех тепĕр пысăк пĕве тунă. Йал хушшинче 12 çăл, вĕсене йусаса тасатсах тăраççĕ. Йалта йăвăç мунчасене хутма чарнă. Кăмакасене пăхса тухса, начар кăмакасене мăрйисене йусаттарнă, тăмпа сĕрттерчĕ.

Ансăртран пушар тухсан кÿлме, шывсем турттарма 3 лаша уйăрнă.

Çемйонăв йулташ массăллă ăнлантарулă ĕçсене те лайăх туса пыраť. Вăл колхозниксемпе йединоличниксене пухусенче пушарпа кĕрешесси çинчен те ниçе хут те ăнлантарнă. Кашни кил çумĕнчех пушар тухсан кăмăл мĕнле йапалапа тухмалли паллă, тата пушарпа кĕрешесси çинчен ăнлантаракан плакатсем пур.

Кăçал дружинă валъли колхоз депо туса пачĕ.

Г. Çмирнов.

Йĕркерен тухса кайнă Вальков

Кăçалхи çул—шăрăх çул. Çăмăр пулман пирки хăшпĕр çĕрте çăлсем, çăлкуçсем типе-типе ларчĕç.

Кун пекки Илйинкăра та (Тутаркас р.) пулчĕ. Суркунерсенпе Илйинкă варĕнчи мăн шырлăнта виç тăват çăлкуçĕнчен ялăк тăрăх шăнкăртатса шыв йухса выртатчĕ. Сăвă те тасе шыв. Анчах çанталăк уйăра кайрĕ. Хĕвел кĕртме тытăнчĕ. Кĕмĕл евĕрлĕ çăлкуçсем типме пуçларĕç. Тăватă çăлкуçĕнчен виççĕшĕ кăйсăрăнса çитрĕç. Тÿмласа таракан çеç пулчĕç. Пĕр çăлкуçĕ типмерĕ.

— Маттур çăлкуçĕ... Уйăрта та типмест,—тесе мухтанатчĕç шыв ăсма анакан хĕрарăмсем.

Пĕррехинче, ир ирех çак çăлкуçĕ патне виçĕ çын çитрĕç. Пуртăсемпе, тимĕр кĕреçесемпе хăйсем. Çăлкуçĕнчен вĕсем кăрăн вăлаксем çыпа-çыпа лартрĕç. Сăйăсене чусна витрĕç. Пăтасем çапрĕç. Тимĕр кăшăлсемпе çыхрĕç.

Ĕç пĕтрĕ. Пукайкинчен вăра, ирĕклĕ йухса тухакан шыв „Плодовощ" савăтĕнче йухса тухакан пулчĕ.

Илйинкăри халăх ĕçмелли шывсăрах тăрса йулчĕ.

—Шыв ăçтан ăсас ĕнтĕ...—терĕç Илйинкăра пурăнакан çынсем.

—Вон йĕрĕ, вăрман патĕнче, тепĕр çăлкуçĕ пур пулмалла... Пытăр ăçтă каяс пулсан, çавăнта кайăр... Чармастăп...,—терĕ „Плодовощ" работникĕ Вальков.

Шыв сук. Типме пуçланă вăлаксем патĕнче хĕрарăмсем 2—3 сехет хушши витресем тулассе кĕтсе лараççĕ.

— Вальков халăхран мăшкăлаť... Апла йурăмасť... Халăха шывсăр хăварма кĕмĕсĕр йапала...—теççĕ.

Çакăн пек сăмахсене пĕр çын кăна каламан. Августăн малтанхи числисенче çеç Илйинкă йалçовĕтне çакнашкал жалăбăна 26 çын пынă. Анчах йалсовечĕ çывăраť—ку тĕлĕшре нимĕнле мĕрăсем те йышăнмасť.

Вальков, хăй ура чухне те, ÿсĕр чухне те, мĕн пур усал сăмахсемпе халăхран мăшкăлаť.

Çынсем ĕнтĕ çăлкуçĕ патне кайма та хăраççĕ.

— Вал тытса хĕнеме те пултарĕ... тет Вальков усал сăмахсемпе кÿрентернĕ ушитĕлнинă.

Вальковăн вăлаксем те ирĕклĕ кайнă. Халăх 1937 çулхи декабĕрĕн 23-мĕшĕнче, кăçхине уйăра йур вăйĕнче пĕр çын тупрĕç. Çак çын Макасей йалĕнчи Çтепан Саворин, Вальков кÿрĕшнĕ, пулнă.

— Мана Вальков вĕлерес пек хĕнерĕ те уйăра йур ăшне пăрахса тытса хăварчĕ...—тет Саворин. — [illegible]

Пĕлтерни

Августăн 9-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Хресчен суртĕнче, Шупашкарти суту-илÿ организацисенче ĕçлекен коммунисcемпе комсомолецсен канашлăвĕ пулаť. Канашлура ВКП(б)Ĥ Чăваш Обком бÿровĕ 1938 çулти майăн 9-мĕшĕнче тата ийулĕн 28-мĕшĕнче суту-илÿ пирки йышăннă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртни çинчен сÿтсе йавмала.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

„Чăваш Коммунĕ"
хаçат кантурĕнче ĕçлеме васкавлă
бухгалтĕр кирлĕ

„ЗАГОТЛЕН"
ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ КАНТУРНЕ
бухгалтĕр-ревизор,
економист (оперативлă учотчик)
счетоводсем,
агрономсем,
платниксем КИРЛĔ
Çак адрĕспе пымалла: г. Чебоксары ул. Ленина, 58. „Заготлен".

Пулă врачĕсемпе пулă тытас ĕçĕн Чăваш республикĕнчи кантурне
счетовод-кассир
ТАТА
секретар—машинистка
кирлĕ
Адрĕсĕ: г. Чебоксары, ул. Ленинградская, 19. Контори Чувашрыбтрест.

Уполномоченный Чувашглавлита № 424.
Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 863.